им. М. Горького
№

ПЕТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитетĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Февраль 10 ЫТЛАРИКУН № 28 (8937)

35-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

И. В. Сталин Аргентина Республикин Посолне Л. Бравона йышăнни (1 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
ПИЛЛĔКМĔШ ПИЛĔКÇУЛЛĂХРИ СТАХАНОВЕЦСЕМ: А. Васильев.—Икĕ çулхи нормăшăн! (1 стр.).
П. Крысин.—СССР гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем (2—3 стр.).
КОММУНИСТСЕМПЕ ПАРТИРЕ ТĂМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН КАНДИДАЧĔСЕМ: А. Жиров.—Халăх артистки (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: Райком пленумĕ МТС-ри парт-бюро ĕçĕ çинчен (2 стр.).
Гектартан 50 центнер тырă илессишĕн. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ П. Пупин юлташ каласа пани (3 стр.).
П. Фролов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Ким Ир Сена Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Маршалĕ ятне панă (4 стр.).
Корея Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнине Корея халăхĕ савăнăçлăн уявланă (4 стр.).

Халăх кандидачĕсем

Вырăнти Советсене суйламалли кун — февралĕн 22-мĕшĕ çывхарса килет. Пур çĕрте те ĕçсыннисен суйлав умĕнхи пухăвĕсем политикăллă пысăк çĕкленӳпе иртеççĕ. Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене, коммунизм строительствин Сталин юлташ палăртса панă аслă программине пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр пикенсе ĕçлет, социализмлă Тăван çĕршыва, генилле çулпуçăмăрпа учителĕмĕре Сталин юлташа чунтан-чĕререн юратнине яр-уççăн кăтартса парать.

Совет Союзĕнчи ĕçсыннисем, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, край, область, округ, хула Совечĕсене депутата суйлама халăхăн аслă та генилле çулпуçне Иосиф Виссарионович Сталин юлташа, унăн çывăх соратникĕсене, Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин руководителĕсене кандидата тăратрĕç.

Вырăнти Советсем — ĕçсыннисен чи демократиллĕ организацийĕсем. Вĕсем урлă государство управленине ĕçсыннисен анлă массисем хутшăнаççĕ. Хальхи суйлавра ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене пĕтĕмпе 1.500 пине яхăн депутат суйламалла. Пирĕн Чăваш республикинче район, хула, ял тата поселок Совечĕсене пĕтĕмпе 10.306 депутат суйламалла.

Хуçалăхпа культура строительствин пысăк тата нумай енлĕ ĕçĕсене ертсе пыракан вырăнти Советсенче ĕçлеме ĕçсыннисем хăйсен чи лайăх представителĕсене, активлă, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлекен, умра тăракан задачăсене, суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсене чыслăн пурнăçлама пултаракан, коммунизм тума чунтан-чĕререн тăрăшакан çынсене уйăрса яраççĕ. Округсенчи суйлав комиссийĕсем регистрациленĕ кандидатсем вĕсем — коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем.

Шупашкарти Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводăн коллективĕ коммунизмăн аслă стройкисен заказĕсене срокчен пурнăçлассишĕн кĕрешекен, ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерме пулăшакан меслетсене шыраса тупакан, ĕç нормисене иртгерсе тултаракан юлташсене — А. А. Артемьева мастера, В. М. Митрофанова монтажникăна, Н. И. Кириллов аслă мастера, А. В. Кузнецов газосварщика, К. А. Александрова контролера, аслă технолог пулса ĕçлекен Б. И. Хватов юлташа кандидата тăратрĕ. Куславкка район Советне депутата суйлама çуртсем тăвакан заводри паллă стахановкăна — Н. Куликова юлташăн кандидатурине регистрациленĕ. Вăл пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри задание тултарнă, халĕ ултăмĕш пилĕкçуллăх шучĕпе ĕçлет.

Кандидатсем хушшинче социализмлă уйхир ĕçĕнче чапа тухнă çынсем те йышлă. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Социализмлă Ĕç Геройĕсене—В. В. Зайцев, А. Е. Петрова, Г. И. Емельянов юлташсене ял Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Зайцев юлташ ертсе пынипе колхоз миллионер пулса тăчĕ. Ишлей районĕнчи Ишек ялĕнчи интеллигенция представительне—РСФСР тата ЧАССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учительницине, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне Х. Д. Дмитриева юлташа ял Советне депутата суйлама кандидата тăратнă. Колхозлă ял вырăнти Советсене суйлама сĕннĕ кандидатсем хушшинче вăйлă тырпул мастерĕсем, выльăх-чĕрлĕхрен пысăк тупăш илекенсем, колхоз бригадирĕсемпе председателĕсем, ял Совет председателĕсемпе секретарĕсем, учительсем, врачсем, фельдшерсем сахал мар.

Шупашкарти искусство работникĕсем хула Советне депутата суйлама Сталинла премин лауреатне Ф. М. Лукин юлташа, РСФСР тава тивĕçлĕ артистне тата ЧАССР халăх артистне Б. А. Алексеев юлташа, Чăваш АССР халăх артистне Б. А. Токмаков юлташа, Чăваш АССР халăх артисткине О. И. Ырзем юлташа кандидата тăратрĕç.

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем вĕсем — Тăван çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем, Ленин—Сталин партийĕ воспитани панă çынсем. Кашни кандидатăн пурнăçĕпе ĕçĕсем советлă строй çĕнтерне çĕршывра, Сталинла Конституцин çутă хĕвелĕ айăшинче çынсен творчествăллă тата организаторла пултарулăхĕ чечекленсе пыни çинчен калаççĕ.

Пирĕн республикăра вырăнти Советсене депутата суйлама регистрациленĕ кандидатсем хушшинче коммунистсем 46.2 процент, комсомолецсем 9,1 процент, партире тăманнисем 44,7 процент шутланаççĕ, çав шутра хĕрарăмсем 33.3 процент. Çак цифрăсем пирĕн çĕршывра Сталинла Конституци власть органĕсене суйлама панă правăпа пурте, партире тăракансем те, партире тăманнисем те туллин усă курни çинчен калаççĕ Коммунистсем те, партире тăманнисем те Ленин — Сталин партийĕ ертсе пынипе коммунизм тăвассишĕн пĕрле кĕрешеççĕ.

Халĕ пур çĕрте те суйлавçăсем кандидатсемпе тĕл пулмалли пухусем пулса иртеççĕ. Пухусенче доверенăйсем кандидатсен пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ, суйлавçăсем вырăнти Советсен суйлавĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса тунă çитĕнӳсем çинчен пĕлтереççĕ, малашне тата лайăхрах ĕçлеме пулаççĕ, вырăнти Советсене наказсемпе сĕнӳсем параççĕ. Суйлавçăсем кандидатсене паракан сĕнӳсемпе наказсем хуçалăхпа культура строительствинчи çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене пĕтерме, вырăнти Советсен ĕçне лайăхлатма пулăшаççĕ.

Доверенăйсемпе агитаторсен пухусенче кашни кандидатăн пурнăçĕ, производствăри ĕçĕпе обществăллă ĕçĕ çинчен суйлавçăсене тĕплĕн каласа памалла. Кашни суйлавçă хăйĕн камшăн сасăламаллине лайăх пĕлсе тăтăр. Кандидатшăн агитациленĕ чухне совет çĕршывĕн çитĕнĕвĕсем çинчен, иртнĕ суйлавранпа хулара, районта, ялта, поселокра пулнă улшăнусем çинчен, малашнехи ĕçсем çинчен каласа памалла. Агитпунктсенче, суйлавçăсен килĕсенче кандидатсемшĕн агитацилес ĕçе анлă сарас пулать. Кандидатсем çинчен районти, хулари, заводри, колхозри хаçатсем çинче ытларах çутатмалла, радио тăрăх ăнлантарса памалла. Халăх кандидачĕсемшĕн анлăн агитацилени çак суйлавра коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокне çĕнĕ çĕнтерӳ тума май парĕ.

Агитаторăн чи пысăк тивĕçĕ вăл ĕçсыннисене партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă классикла произведенийĕ çинчен ăнлантарса парасси пулать.

Суйлавччен вăхăт нумай юлмарĕ. Кашни кунпа суйлава пур енчен те тĕплĕн хатĕрленсе çитме туллин усă курас пулать. Парти организацийĕсен суйлав кампанине ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла, кандидатсемшĕн агитацилес ĕçе анлă сармалла, вырăнти Советсен исполкомĕсем суйлава организациллĕ-техникăллă ĕçсем енĕпе пĕтĕмпех хатĕрленсе çитмелле.

Совет çыннисем суйлава Ленин — Сталин партийĕ тавра тачă пĕтĕçнипе, Сталинла Конституцин пĕтĕм тĕнчене хĕвел пек çутатакан ялавне çӳле тытса пынипе кĕтсе илеççĕ. Суйлав кунĕнче вĕсем, пурте пĕр çын пек пулса, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн, социализмлă Тăван çĕршывăн хăватне тĕреклетессишĕн, мирлĕ пурнăçшăн, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн сасăлĕç.

И. В. Сталин Аргентина Республикин Посолне Л. Бравона йышăнни

Кăçалхи февралĕн 7-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин Аргентина Республикин Посолне Л. Бравона йышăнна.

Йышăнура СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ А. Я. Вышинский пулнă.

Пурăнмалли çуртсем тунă çĕрти çĕнĕ майсем

«Мосгражданжилстрой» трест инженерĕсем Козловпа Большаков юлташсем пурăнмалли çуртсем лартнă чухне хваттерсем хушшинчи тата пӳлĕмсем хушшинчи перегородкăсене çĕнĕ майпа тума сĕнӳ панă. Вĕсем атарласа прокат станĕ тунă. çав стан 10—12 тăваткăл метр пысăкăш панельсем туса кăларать. Панельсене йывăç ăпаласем тунă чухне юлакан юлашкисенчен тата гипсран тăваççĕ. Панельсене хваттерсем тата пӳлĕмсем хушшинчи перегородка пулмалли вырăна вырнаçтарса лартаççĕ, Вĕсем çине сăрласа илеççĕ, Çăнаса пăхнă чухне прокат станĕ лайăх ĕçленĕ.

Çĕр кăмрăк промышленность министерствин йышăнăвĕ тăрăх, Мускавра, йывăç ăпаласем тăвакан Лужниковски комбинат территорийĕнче, перегородкăсем нумай туса кăларакан цех уçаççĕ.

Перегородкăсем тумалли панельсене заводсенче туса хатĕрлесен, пурăнмалли çуртсем тата культурăпа пурнăç учрежденийĕсем валли çуртсем лартнă чухне перегородкăсем тума ĕç вăйĕ ик-виçĕ хут сахалрах кирлĕ пулать.

(ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

Коммунизмăн аслă стройкисенче

КОМСОМОЛЬСК ПОСЕЛОКĔ (Куйбышев облаçĕ), февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Атăл тăрăх тăвалла, Куйбышев тинĕсĕ еннелле пыракан пăрахутсен, гидроэлектростанци плотини патне çитес чухне сылтăмалла пăрăнса, шлюза кĕмелле пулать. Аслă стройкăн çак участокĕнче икĕ шлюз тата каналсем тумалла. Кунта 20 миллион кубометр ытла çĕр чавса кăлармалла, шлюзсемпе ытти гидротехникăллă сооруженисем тунă çĕрте 1.700 пин кубометр бетон хумалла.

1951 çулхи çуркунне çак вырăнта хăмăш тата хĕрлĕ хăва ӳссе ларнă айлăм пулнă. Çав çулхине июль уйăхĕнче хăватлă земснарядсем строительство площадкине шыв илесрен сыхлама перемычка тума тытăннă. Çав вăхăтрах гидротехника сооруженийĕсем пулмалли вырăнта котловансем чавма пуçланă.

Гидромеханизаторсем вăйя шеллемесĕр ĕçленипе 1952 çулхи çуркунне шыв тулнă вăхăта лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнĕ. Анатри шлюз пулмалли вырăн тавра çĕр купаласа çӳлĕ дамба тунă, унта 1,5 миллион кубометр ытла тăпра купаланă.

Анатри шлюз котлованĕ хальхи вăхăтра питĕ вăрăм курка пек курăнать. Ун тавра çĕр айĕнчи шыва уçласа кăлармалли шăтăксем чавса тухнă. Котлован тĕпне типĕтме унтан 25 миллион кубометр ытла шыв уçласа кăларнă.

Атăлăн сулахай енче автоматизациленĕ пысăк бетон завочĕ, механически мастерской тата ытти пулăшакан предприятисем ĕçлеççĕ. Арматура завочĕ тăваççĕ, вăл халех ĕнтĕ анатри шлюз валли продукци туса кăларма тытăннă.

Шлюз камерин тĕпне васкасах бетон хураççĕ. Строительсем хĕллехи вăхăтра бетон хумалли çĕнĕ майсемпе усă кураççĕ. Бетон хумалли вырăнсене ăшă тытаççĕ. Анатри шлюза тунă çĕрте планран иртгерсе темиçе пин кубометр бетон хунă.

* * *

ТАХИА-ТАШ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Тахиа-Таш гидроузелне тунă çĕрте ĕç сарăлсах пырать.

Аму-Дарья шывне аяккалла пăрса юхтармалли канала чавнă çĕрте питĕ тăрăшса ĕçлеççĕ. Скреперсемпе бульдозерсен колоннисем, тăпран çи-ти сийĕсене чавса, канал вĕçне çитсе пыраççĕ. Кунтан Туркменири тĕп канал çырми пуçланать.

Аму-Дарья çывăхĕнче, канал чавнă çĕрте, кĕрĕслетнĕ сасăсем илтĕнеççĕ. Кунта подрывниксем пăра ватаççĕ, гидромеханизаторсене ĕçлеме вырăн туса параççĕ. «Сормович—12» земснаряд ĕçleme тытăннă. «303» земснаряд та ĕçлемелли вырăна пырса тăнă.

Тахиа-Ташăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнче пысăк ĕç сарăлса пырать Кунта хăватлă теплоэлектростанци тăваççĕ. Электростанцин тĕп корпусĕ пулмалли вырăнта котлован чавса пĕтернĕ. Строительство ĕçне хăвăртлатма вăхăтлăх бетон завочĕ тăваççĕ.

Мускав. Государствăн Мускаври университечĕн Ленински горари çĕнĕ çӳлĕ çурчĕ.

Ленински горара туса лартнă пысăк çурт корпусĕсем инçетрен курăнаççĕ. Университетăн çĕнĕ çурчĕ—столицăри чи çӳлĕ çурт.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: çĕнĕ çуртăн тĕп корпусĕ.

Н. ГРАНОВСКИЙ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

КАРА-КУМРИ ТРУБОПРОВОД

АШХАБАД, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кара-Кумри пĕрремĕш трубопровода хывмалли вырăна тĕпчесе пăхас ĕçе туса пĕтернĕ. Туркменсельводпроект уйăрнă экспедици яшăм хăйăр сарăлса выртакан вырăнсем тăрăх 500 километр ытла çӳренĕ. Тĕпчев ĕçĕсене шывсăр районта тунă.

Халĕ ĕнтĕ трубопровод проектне, çавăн пекех насус станцисен тата хуçалăх центрĕсен проектне тума тытăннă Кашни хуçалăх центрĕнче, трубопровод сооруженийĕсемсĕр пуçне, пурăнмалли çуртсем, шкул, çыхăну учрежденийĕ, чайхана, магазин пулать. Трубопровод кĕтӳ çӳретмелли 450 пин гектар çĕр çине шыв илсе пыма, Кара-Кум варринчи горняксем пурăнакан Дарвазы поселокне шыв парса тăма май парать. Çак трубопровод Туркменири тĕп канала туса пĕтериччченех ĕçе кĕмелле.

Тĕпчев ĕçĕсене тăвакансене Туркмен ССР-ĕнчи Наука академийĕн институчĕсем пулăшаççĕ, вĕсем трубопровод сооруженийĕсемпе хуçалăх центрĕсене хăйăрсенчен сыхламалли майсене кăтартса параççĕ.

Çывăхри çулсенче шыв парса тămалли трубопроводсем темиçе çĕршер километр тăршшĕ тума палăртнă. Кăçал Заунгуз ятлă тӳрем вырăнăн хĕвеланăç пайĕнче шырав ĕçĕсене тума пуçлаççĕ. Туркменсельводпроект тата тепĕр экспедици уйăрса ярать.

МАЛТА ПЫРАКАН КОЛХОЗСЕМ ÇУРТЫРРИСЕМ АКСА ПĔТЕРНĔ

ГУЗАР (Кашка-Дарья облаçĕ), февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Гузар районĕнчи колхозниксемпе механизаторсем, социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çуркунне акмалли тĕштырăсене ăнăçлă акаççĕ. Тĕштырăсем акмалли уй-хирсен виçĕ пайĕнчен икĕ пайне тулă тата урпа акса хăварнă.

Тельман ячĕпе тăракан тата «Кизил трактор» ялхуçалăх артелĕсен членĕсем паян çуртыррисем акса пĕтернĕ.

Курск хулинче

КУРСК, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Курск хулине фашистла нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнăранпа паян вунă çул тултарчĕ. Хулари клубсенче, кинотеатрсенче, библиотекăсенче тата читальнăсенче иртнĕ вунă çул хушшинче хула строительствинче тата хулана йĕркелесе илемлетес ĕçре тунă çитĕнӳсене кăтартса паракан выставкăсем уçăлнă.

...1943 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Курск хули çурт ишĕлчĕкĕсен купи пулнă. Хулари мĕнпур промышленность предприятийĕсене, электростанцие, трамвая, водопровода пĕтĕмпех аркатса тăкнă пулнă.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăрăшнипе Курск хулине ирĕке кăларнă малтанхи кунсенчен пуçласах хулана юсама тытăннă. Хула хăвăрт юсанса, вăрçă умĕнхи вăхăтринчен лайăхрах пулса пырать. Хула варринчи урамсенче нумай хутлă хитре çуртсем лартаççĕ Тĕп урамра медицина институчĕн çурчĕсене çĕнĕрен туса лартнă. Госбанк çуртне, Пионерсен çуртне тата уттисене те юсаса çĕнетнĕ. Хула варринчи урамсемпе площадьсене асфальт сарнă, йывăçсем нумай лартса ӳстернĕ. Хулара драма театрĕ, 3 кинотеатр, музей, картинăсен галлерейи, клубсемпе библиотекăсем 200 ытла, 34 шкул ĕçлеççĕ. Пурăнмалли çуртсене вуншар çурт юсанă тата çĕнĕрен туса лартнă.

Хальхи вăхăтра хулара çĕнĕ пысăк стройкăсем 20 ытла шутланаççĕ.

Хула промышленноçĕ хăвăрт аталанса пырать. Вăл, вăрçă умĕнхипе танлаштарсан, темиçе хут нумайрах продукци туса кăларать.

Курск хулинчи малта пыракан предприятисен коллективĕсем хулана ирĕке кăларнăранпа вунă çул çитнĕ куна планран иртгерсе продукци туса кăларнипе паллă тунă. Курск хулине ирĕке кăларнăранпа вунă çул тултарнă ятпа савăнăçлă ларусем пулса иртнĕ.

Паян хулари ĕçсыннисем Курск хулине ирĕке кăларассишĕн пулнă çапăçусенче вилнĕ воинсен вил тăпри çине чечек çыххисем нумай хунă.

Çĕнĕ библиотекăсем

КИЕВ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн малтанхи икĕ çулĕ хушшинче республикăра çĕнĕрен 20.775 библиотека уçнă. Ялсенче библиотекăсем уйрăмах нумай уçăлнă. Черновицы, Дрогобыч, Херсон тата ытти облаçсенче те кашни ялта пекех библиотека пур.

Кăçал Украинăра тата 600 библиотека ытла уçма палăртнă. Библиотекăсем валли кĕнеке туянма государство 160 миллион тенкĕ уйăрса панă. ку вăл иртнĕ çулхинчен 50 миллион тенкĕ ытларах пулать. Библиотекăсенче ĕçлеме кадрсем хатĕрлеççĕ.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхри стахановецсем

Икĕ çулхи нормăшăн!

10 çул каялла эпĕ, 17 çулхи çамрăк, Канашри вагонсем юсакан завода ĕçлеме кĕтĕм. Унччен чăваш ялĕнче пурăннă, колхозра ĕçленĕ çын, паллах, заводри хăватлă техникăна пĕлмен. Ун чухне манăн нимĕнле професси те пулман.

Мана чугунпа хурçă шăратакан цеха ученика илчĕç. Паллă, ĕçе лайăх пĕлекен Михаил Курбатов формовщик вĕрентрĕ мана. Вăл час-часах Россиăра чугун шăратас ĕç мĕнле çуралса аталанни, сталинла пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче туса лартнă металлурги гиганчĕсем çинчен ăнлантарса паратчĕ. Опытлă формовщик васкаса ĕçлени, тĕрлĕ операцисене тĕрĕс туни, детальсене илемлĕ, пысăк пахалăхлă шăратса кăларни, металл çынна пăхăнни мана хытă тĕлĕнтеретчĕ, Курбатов юлташ хăйĕн опычĕпе, «секречĕсемпе» паллаштаратчĕ, тĕрлĕ кĕнекесем, журналсем вулама сĕнетчĕ.

Формовщик профессийĕ кăмăла кайрĕ. Куç умĕнче металран темле детальсем те туса кăларни кама савăнтармĕ? Формовщиксем кача пӳрнерен те пĕчĕкрех детальрен тытăнса тоннăшар таякан детальсем шăратса кăлараççĕ. Кашни станокра, машинăра, пăравусра, самолетра формовщик ĕçĕ пур. Хавхаланса ĕçленине, вĕреннине, ватă рабочисемпе мастерсем тăван атте пек пулăшнине пула икĕ уйăхран чыслă ят—формовщик ятне илме тивĕçлĕ пултăм. Тăваттăмĕш разрядри рабочи пулни мана çав тери савăнтарчĕ

Хам тĕллĕн ĕçлеме тытăнни манăн ответлăха ӳстерчĕ. Тата пикенерех вĕренме, производство новаторĕсен опычĕпе тимлĕрех интересленме тиврĕ. Кружоксемпе курссенче вĕренни, инженерсемпе техниксем пулăшни ăсталăха пĕрмай ӳстерме, йывăрлăхсене пĕтерсе пыма пулăшрĕç Юлашки çулсенче тăтăшах ĕç нормине иртгерсе тултаратăп. Эпĕ шăратса кăларакан детальсем яланах тĕрĕс, таса пулаççĕ, вĕсене контролерсем пысăк хак параççĕ. Пĕлтĕр 1,67 çулхи ĕç нормине тултартăм.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисем, И. В. Сталин юлташăн çĕнĕ произведенийĕ пире, рабочисене, çав тери хавхалантарчĕç, ĕçре çĕнĕ çĕнтерӳсем тума вăй-хăват пачĕç. Эпĕ, ытти нумай рабочисем пекех, пилĕк çуллăх нормăна срокчен тата иртгерсе тултарма, хамăн опытпа çамрăксене паллаштарма, ĕç мелĕсене пĕрмай çĕнетсе, лайăхлатса пыма сăмах патăм.

Юлашки вăхăтра нумай груз тиекен вагонсем валли колонкăсем шăратса кăлартăм. Задани тăрăх сменăра 12 деталь туса кăлармалла. Эпĕ 24-шар деталь парса пытăм. Анчах унпа лăпланса лармастăп. Вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса тата тухăçлăрах ĕçлеме социализмлă обязательство йышăнтăм. Çак кунсенче ĕç нормине 250-шар процент тултарса пыратăп. Кирек мĕнле кăткăс деталь туса кăлармалла пулсан та стахановец ятне ямастăп.

1952 çулта ман пурнăçра ĕмĕр асран каймин ĕç пулса иртрĕ: чугун çул работникĕсен профсоюзĕн Центральнăй Комитечĕ мана «СССР Çул-йĕр министерствине пăхăнса тăракан вагонсем юсакан заводсенчи чи лайăх формовщик» ятне пачĕ. ВЛКСМ Чăваш обкомĕ те пысăк чыс кӳчĕ — Хисеп грамоти пачĕ.

— Çав çитĕнӳсене эсĕ мĕнле майпа тăватăн,—ыйтаççĕ пĕрисем,—сан пек ĕçлес тесен мĕн тумалла,—теççĕ теприсем. Пирĕн çĕршывра кашни çын тухăçлă ĕçлеме, хăйĕн пултарулăхĕпе ăсталăхне ӳстерсе пыма пултарать. Ĕçе юратни, техникăна лайăх пĕлни, наукăпа техника çитĕнĕвĕсемпе, малта пыракансен опычĕпе усă курни çеç кирлĕ.

Ĕçе çапла йĕркелетĕп: чи малтан ĕç вырăнне лайăх хатĕрлесе, тирпейлетĕп. Моделе çу сĕрсе вырнаçтаратăп, унтан графитпа хăйăр хатĕрлесе хуратăп, инструментсене — пневматически трамбовкăпа гладилкăсене тĕрĕслесе тухатăп. Ĕçе тĕплĕн хатĕрленни кашни минутпа туллин, тĕрĕс усă курма май парать.

Производствăра пĕчĕк ĕçĕн, кашни утăмăн, кашни хусканăвăн пĕлтерĕшĕ пысăк. Моделе тӳрĕ лартмасан форма чалăш пулать, деталь юрăхсăра тухать. Çавăн пекех тăпра паха мар, нӳрĕллĕ пулни те ĕçре чăрмантарать. Технологи процесне пăртак пăсни те государствăна сиен кӳрет. Çавăнпа технологи дисциплинине пурнăçлассине хамăн пирвайхи тивĕç тесе шутлатăп. Паха детальсем шăратса кăларма кирек мĕнле çитменлĕх пулсан та ăна пĕтермесĕр, тивĕçлĕ условисе туса хатĕрлемесĕр ĕçе тытăнмастăп. Лабораторипе тачă çыхăну тытатăп. Тăпра паха мар пек туйăнсан лабораторинче тĕрĕслеттеретĕп. Инженерсемпе, техниксемпе, мастерсемпе час-часах канашлатăп. Заводра техникăллă библиотека пур. Унта час-часах çӳретĕп, çĕнĕ кĕнекесемпе паллашатăп. «Литейное производство»—манăн чи юратнă журнал Вăл пичетлесе кăларакан материалсене тулли кăмăлпа вулатăп, наукăпа техника çитĕнĕвĕсемпе усă курма тăрăшатăп.

Нумаях пулмасть пирĕн участокра хронометраж иртгерчĕç. Нормировщиксем эпĕ подшипник шăратмалли операцисене ыттисенчен 50 секунд хăвăртрах тунине палăртрĕç. Ĕлĕкрех моделе формăсенчен алă вăйĕпе уйăратчĕç. Эпĕ çак операцине станокпа тума тытăнтăм. Çавăнпа та юлташсенчен тухăçлăрах ĕçлетĕп иккен. Халĕ ман опыта сараççĕ.

Стахановецсен питĕ лайăх туйăм — хăйсен опычĕпе ыттисене паллаштарас, çамрăксене вĕрентес йăла пур. Эпĕ, ытти новаторсем пекех, чылай çамрăк вĕрентрĕм тата вĕрентетĕп. Вĕсем тухăçлă ĕçлени мана савăнтарать. Сăмахран, Тарасов юлташ ĕç нормине 200—250 процент тултарса пырать.

Пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар. Цех брак чылай тăвать, хăшпĕр рабочисем тухăçлă ĕçлеймеççĕ, производство культури çӳлти шайра тămасть. Цех администрацийĕн çавăнăçусăрлăхне кăтартакан тĕслĕхсем сахал мар. Паха тăпра çителĕклĕ кӳрсе килменнине пула продукци пахалăхĕ чакать. Пĕр тикĕс, графикпа тăрăх ĕçлессине те кирлĕ пек йĕркелемен.

Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, коммунизм обществи хăвăртрах туса çитерессишĕн тата хастарлăрах ĕçлес килет. Эпĕ хам умма кăçал икĕ çулталăкри ĕç нормине тултарас тĕллев лартрăм. Ăна чыслăн пурнăçласси пирки иккĕленместĕп.

А. ВАСИЛЬЕВ,
Канашри вагонсем юсакан заводăн формовщикĕ.

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Чăплă машинистсем

УЛАТĂР. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне, Павел Иванович Казяев машиниста Хусан чугун ҫулĕ ҫинче лайăх пĕлеҫҫĕ. Вăл пуҫаруллă, техникăна лайăх пĕлекен, ниҫан та тунă ҫитĕнӳсемпе лăпланса ларман, ҫĕнĕрен те ҫĕнĕ мелсем шыракан ҫын. Йывăр тиенĕ поездсем илсе ҫӳрес, топливо перекетлес, ҫамрăксене вĕрентес ĕҫре Павел Иванович яланах паха тĕслĕхсем кăтартать.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ йышăннă решенисемпе тата И. В. Сталин юлташăн произведенийĕсемпе хавхаланса ĕҫлесе, Казяев юлташ иртнĕ ҫул пысăк ҫитĕнӳсем турĕ: нормăран иртерсе 22.240 тонна груз турттарчĕ, 126 тонна ҫĕр кăмрăкĕ перекетлерĕ.

Вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, Павел Иванович тата тухăҫлăрах ĕҫлеме тытăнчĕ. Иртнĕ уйăхри икĕ вунăкунлăхра вăл нормăран иртерсе 2.500 тонна груз турттарчĕ, 4,142 килограмм ҫĕр кăмрăкĕ перекетлерĕ, пăравуса чуптармалли задание иртерсе пурнăҫларĕ.

Казяев юлташ—Улатăр хула Совечĕн депутачĕ. Вăл суйлавҫăсен сĕнĕвĕсене чыслă пурнăҫлама, ĕҫсыннисене куллен пулăшса пыма тăрăшать. Пăравус деповĕн коллективĕ Улатăр хула Совечне депутата суйлама Павел Ивановича тепĕр хут кандидата тăратрĕ.

37-мĕш ҫул ĕҫлет чугун ҫул ҫинче Калентий Васильевич Белоглазов юлташ. Унăн патриотла ĕҫĕсем ҫинчен каласа пама кĕнеке ҫырас пулать. Хăйĕн сисĕмлĕхĕпе, чун-чĕререн тăрăшса ĕҫленипе вăл ҫĕршер ҫын пурнăҫне ҫыхлаха хăварнă. Мĕн чухлĕ ҫамрăка вĕрентмен-ши вăл кăткăс техникăна алла илме, стахановла ĕҫлеме?! Унăн ученикĕсем нумайăшĕ ертсе пыракан вырăнта ĕҫлеҫҫĕ. Хусан чугун ҫулĕн Улатăр уйрăмĕн начальник ĕҫне вăхăтлăха туса тăракан А. Шигаев юлташ, пăравус деповĕн начальникĕ А. Царев юлташ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, паллă машинист П. Казяев юлташ, СССР Ҫулйĕр министерствин инспекторĕ Н. Семенов юлташ т. ыт. те Белоглазов юлташ ученикĕсем пулнă.

Партипе правительство Калентий Васильевич ĕҫне пысăка хурса хакланă, ăна Ленин орденĕ, «Хисеп палли» орденĕ парса наградăланă. Унăн кăкăрĕ ҫинче «Хисеплĕ чугун ҫул работникĕ» тата ытти значоксем.

Самрăк мар пулин те, Белоглазов юлташ ывăнма пĕлмесĕр ĕҫлет, ыттисене хавхалантарать. Вăл ĕҫлекен С-342 пăравус яланах таса, юсавлă. Поездсене график тăрăх ҫӳретесси, топливо перекетлесси, хăйĕн опычĕпе ыттисене паллаштарасси—унăн йăлине кĕнĕ. Производствăра тăрăшса ĕҫленĕ вăхăтрах Калентий Васильевич обществăлла ĕҫе активлă хутшăнать. Чылайранпа ĕнтĕ вăл хула Совечĕн депутачĕ. Суйлавҫăсем каллех ăна хула Совечне депутата суйлама кандидата тăратрĕҫ.

Пиллĕкмĕш пилĕкҫуллăхри паллă стахановецсем П. И. Казяевпа К. В. Белоглазов юлташсем—хула Совечĕн депутачĕсем пулма тивĕҫлĕ кандидатсем. Эпир Улатăр хулинчи 90-мĕшпе 73-мĕш округсенчи суйлавҫăсем пурте, пĕр ҫын пек пулса, хăйсен сассисене коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн парасса шанатпăр.

Б. КАУРОВ.

Халăх артистки

Чăваш академи театрĕпе республикăри вырăс драма театрĕн коллективĕсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче 63-мĕш суйлав округĕ тăрăх Шупашкар хула Советне депутата суйлама Чăваш АССР халăх артисткине Ольга Ивановна Ырзем юлташа кандидата тăратрĕҫ.

О. И. Ырзем—Чăваш АССР театр искусствин паллă представителĕ. Вăл театр искусствине аталантарас енĕпе тава тивĕҫлĕ нумай ĕҫсем турĕ. Ольга Ивановна 1895 ҫулта Куславкка районĕнчи Куснар ялĕнче хресчен ҫемйинче ҫуралнă. Ялти шкултан вĕренсе тухнă хыҫҫăн Карач ялĕнчи фельдшер патĕнче пĕр ҫул хушши ача пăхса пурăннă. Ун хыҫҫăн Шупашкарти хĕрарăмсен гимназине вĕренме кĕнĕ. Вĕреннĕ вăхăтра вăл килтен нимĕнле пулăшу та илеймен. Анчах Ырзем юлташăн вĕренес кăмăл питĕ пысăк пулнă.

Гимназирен вĕренсе тухнă хыҫҫăн Ырзем пĕр ҫулталăк хушши хăйсен ялĕнче учительница пулса ĕҫлет. Ун хыҫҫăн Хусана вĕренме каять. Хусанта вĕренекен чăваш студенчĕсем пĕр пухура драма кружокĕ организацилеме йышăннă. Ырзем юлташ ҫав кружокăн активлă членĕ пулнă. Студентсем ушкăнпа вырăссен аслă драматургĕ А. Н. Островский ҫырнă пьесăсене чăвашла куҫараҫҫĕ. Репетицисене РСФСР Национальноҫсен Халăх Комиссариачĕн чăваш уйрăмĕн ҫуртĕнче тата студентсен Старогоршеннăй урамри общежитийĕнче иртернĕ. Малтанхи спектакльсене Хусанти «Купечески клубра», «Ампир» театрта, «Пысăк театрта» тата ытти ҫĕрте те, ăҫта сцена пур, ҫавăнта лартнă. Спектакльсене курма чăваш красноармеецĕсемпе командирĕсем, Хусана пынă чăвашсем ҫӳренĕ.

1921 ҫулта Ырзем юлташа Енисейск кĕпĕрнинчи Канск хулине ярасҫĕ. Унта вăл пилĕк уйăх хушши красноармеецсен шкулĕнче хут пĕлменлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе ĕҫлет, хулара драма кружокĕ организацилет. Ҫав ҫулах тăван Шупашкара таврăнать. Выҫлăх ҫул пурăнма питех те йывăр пулнă. Ҫапах та Ольга Ивановна театрта ĕҫлеме пăрахман. Артистсем хăйсен вăйĕсемпе вырăс драматургĕсен пьесисене куҫарнă, чăваш драматургĕсен пьесисене сцена ҫинче лартма хатĕрленĕ. Ырзем чи малтанхи пьесăсенче: К. В. Ивановăн «Нарспи» пьесинче Нарспи рольне, Н. В. Гоголĕн «Авлану» пьесинче — Агафья Тихоновна рольне, А. Н. Островскин «Ҫуклăх—кăлтăк мар» пьесинче—Любовь Гордеевна рольне, «Вăрман» пьесăра—Аксюша рольне, Шиллерăн «Хаярлăхпа юрату» пьесинче—Луиза рольне, Н. В. Гоголĕн «Ревизор» пьесинче — Марья Антоновна рольне, М. Акимовăн «Вăхăтсăр вилĕм» пьесинче — Верук рольне, П. Осиповăн «Айдар» пьесинче — Пинерпи рольне, «Кушар» пьесăра—Лисук рольне вылянă.

Чăвашсен паллă драматургĕн Ф. П. Павловăн «Ялта» пьесинчи Елюк рольне чи малтан вылякансенчен пĕри Ырзем юлташ пулнă. Федор Павлович Павлов Ырзем юлташăн лайăх вăййине палăртса, ăна хăйĕн «Ялта» кĕнекине парса парнеленĕ.

— Акă вăл Федор Павлович парнеленĕ кĕнеке,— терĕ Ольга Ивановна. Вăл кĕнеке ҫине Ф. П. Павлов ҫапла ҫырнă: «Чăваш труппинче Елюк рольне чи малтан вылянă Ольга Ивановна Ырзема—автортан. Ф. Павлов. 1922 ҫулхи июнĕн 11-мĕшĕ. Шупашкар хули».

Юлашки вăхăтра Ырзем юлташ В. Алагерăн «Виҫĕ хĕр», А. Эсхелĕн—«Вут чулĕ», В. Ржановăн — «Энтип», Т. Г. Шевченкăн — «Назар Стодоля», Н. Дьяконовăн—«Парнеллĕ туй», Ю. Буряковскин—«Пурнăҫа юратса» пьесисене тата ытти пьесăсене лартнă ҫĕре хутшăннă.

Ольга Ивановна чăваш театрĕн сцени ҫинче 35 ҫул хушши пĕр татăлмасăр ĕҫлет. Вăл—чăвашсен малтанхи артисчĕсенчен пĕри. 35 ҫул хушшинче Ырзем 150 роль ытла вылянă. Вăл кашни роле вылямa тĕплĕн хатĕрленет, геройсен сăнарĕсене тĕрĕс, пурнăҫри пек кăтартса парас тесе кĕнекесем нумай вулать, материалсем пухать.

— Эпир «артист вылярĕ» теме хăнăхнă. Эпĕ вăл сăмаха тĕрĕсех мар тетĕп. Артист сцена ҫинче чăн-чăн пурнăҫа кăтартса памалла, пьесăри геройсемпе пĕрле хуйхăрмалла, савăнмалла, тарăхмалла,— тет Ольга Ивановна.

Чăваш театрĕ совет саманинчи телейлĕ пурнăҫа, совет халăхĕ пĕтĕм тĕнчери мире сыхланине, коммунизм тăвассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешнине кăтартса парас тĕлĕшпе сахал мар ĕҫлерĕ.

Чăваш театр искусствине аталантарас тĕлĕшпе ырми-канми ĕҫленĕшĕн Ольга Ивановна Ырзем юлташа 1933 ҫулта Чăваш АССР тава тивĕҫлĕ артистки ятне, 1945 ҫулта Чăваш АССР халăх артистки ятне панă, 1950 ҫулта Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. Ăна «1941—1945 ҫулсенчи Аслă Отечественнăй вăрҫă вăхăтĕнче хастарлă ĕҫленĕшĕн» медаль панă.

Ольга Ивановна тĕрлĕ ҫĕртен ҫырусем нумай илет. Акă, ун сĕтелĕ ҫинче Етĕрне районĕнчен килнĕ ҫыру выртать. Ҫыру авторĕ—ҫамрăк хĕрача артистка пулма ĕмĕтленни ҫинчен, ăҫта вĕренме кайса артистка пулма пулать, тесе ҫырать, канаш ыйтать. Ольга Ивановна кашни ҫыру ҫинех ответ, канаш парать.

— Пирĕн ҫамрăксем умĕнче ҫул уҫă. Вĕсен хăйсен пĕлĕвне, пултарулăхне ӳстерме пур условисем те пур. Мĕншĕн тесен эпир совет саманинче, социализм ҫĕршывĕнче пурăнатпăр. Хамăрăн театр искусствине аталантарма пулăшнăшăн юратнă ҫулпуҫăмăра—Иосиф Виссарионович Сталина чунтан тав тăватăп,— тет Ырзем юлташ.

Шупашкарти 63-мĕш суйлав округĕнчи суйлавҫăсем февралĕн 22-мĕшĕнче чăваш театр искусствин паллă представителĕшĕн—Ольга Ивановна Ырзем юлташшăн пĕр ҫын пек пулса сасăлĕҫ.

А. ЖИРНОВ.

КУЛЬТУРĂПА ҪУТĔҪ РАБОТНИКĔСЕН КАНАШЛĂВĔ

ҪĔРПӲ. Парти райкомĕпе райсовет исполкомĕн культурăпа ҫутĕҫ пайĕ районти вулав ҫурчĕсемпе клуб заведующийĕсен икĕ кунлăх семинарне ирттерчĕҫ. Унта 27 ҫын пулчĕ. Семинарта пулнисем лекцисемпе докладсем итлерĕҫ.

Х. ЛИСИН.

Колхозлă ялăн лайăх ҫыннисем

ПЕРВОМАЙСКИ. Ял Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсене округсенчи суйлав комиссийĕсем регистрацилерĕҫ. Вĕсем пурте—колхозлă ялăн чи лайăх ҫыннисем. Кандидатсем хушшинче тĕрлĕ профессиллĕ ҫынсем—партипе совет работникĕсем, колхоз председателĕсем, колхоз производствинче мухтава тухнă колхозниксемпе колхозницăсем, учительсем, агрономсем, медицина работникĕсем пур.

«Пионер» колхоз членĕсем Пăлапуҫ Пашъел ял Советне депутата суйлама хăйсен колхоз председательне Р. Сынгаров юлташа кандидата тăратрĕҫ. Ку колхоз тырпул тухăҫлăхне ҫултан-ҫул ӳстерет, обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пырать. 1952 ҫулта колхозра техникăллă культурăсемпе тымарҫимĕҫ туса илес тĕлĕшпе пысăк ҫитĕнӳ тунă. А. Рейнов юлташ ертсе пыракан бригада кашни гектартан 10 центнер кантăр вăрри, 5,5 центнер йĕтĕн вăрри, 800 центнер выльăх кăшманĕ тата 500 центнер турнепс туса илнĕ. 1952 ҫулта кашни ĕнерен 1.206-шар литр сĕт суса илнĕ.

Ҫавăн пекех ял Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем—«Красная поляна» колхоз председателĕ П. Степанов, «Путь социализма» колхоз председателĕ Е. Кольцов, Шверник ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Т. Тимофеева, «Сталинград» колхоз председателĕ П. Павлов, «Путь коммунизма» колхоз председателĕ А. Маназыпов юлташсем те ялхуҫалăх артелĕсене пултаруллă ертсе пыраҫҫĕ.

Кандидатсем хушшинче вăйлă тырпул мастерĕсем, доярккăсем, конюхсем, рядовой колхозниксем йышлă. Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Анат Тăрмăш ял Советне депутата суйлама кандидатсем тăратнă чухне И. Едриванов юлташăн ятне ăшă кăмăлпа асăнчĕҫ. Едриванов юлташ чылайранпа уй-хир бригадирĕ пулса ĕҫлет, ҫулленех пысăк ҫитĕнӳсем тăвать. 1952 ҫулта вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан 22-шер центнер кĕрхи тулă, 20-шер центнер «Торсдаг» сортлă пăрҫа туса илнĕ.

Липовка ял Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче Калинин ячĕпе тăракан колхозри хурт-хăмăр ăсти Илья Иванович Иванов пур. Вăл тăрăшнипе колхоз утарĕсем вăйланса пыраҫҫĕ. Халĕ колхоз утарĕсенче 468 вĕллене ҫитнĕ. Хастарлă хурт-хăмăр ăстаҫине, 62 ҫулхи колхозника—Иванов юлташа «Социализмлă ялхуҫалăхĕн отличникĕ» ятлă значокпа тата Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Ял Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем—«Пионер», «Комсомолец» колхозсенчи Е. Соколовăпа Н. Мешкова доярккăсем те хăйсен ĕҫĕнче пысăк ҫитĕнӳсем тунă.

Ял Советсене депутата суйлама ялти интеллигенцин чи лайăх представителĕсене кандидата тăратнă. Вĕсем хушшинче—Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕҫлĕ учителĕсем В. С. Антоновпа А. П. Петров, вулав ҫурчĕсен заведующийĕсем И. М. Потапов, Д. Е. Федотов, Е. К. Шмелев юлташсем, медицина работникĕсем 11 ҫын тата ыттисем те.

А. ТУКМАКОВ.

ПАРТИ ПУРНĂҪĔ

Райком пленумĕ МТС-ри партбюро ĕҫĕ ҫинчен

КПСС Елчĕк райкомĕн черетлĕ пленумĕ МТС-ри пуҫламăш парторганизацин ĕҫĕ ҫинчен партбюро секретарĕ Медведев юлташ тунă доклада сӳтсе яврĕ.

МТС-ри пуҫламăш парторганизацире КПСС членĕсем 42 ҫын тата 4 кандидат. Парторганизацин шалти ĕҫĕ аванланнă, коммунистсен авангардлă ролĕ ӳснĕ. Контроль правипе усă курса, парторганизаци производство ыйтăвĕсене татса парас ĕҫе активлă хутшăнать. Ҫаксем пурте механизаторсен производствăлла активлăхне куллен ӳстерсе пыма пулăшнă. МТС тракторпа тумалли ĕҫсен планне 112 процент тултарнă, кашни тракторпа 442 гектар ĕҫ тăвас вырăнне 515 гектар тунă.

Уйрăм механизаторсемпе бригадăсем тата та пысăкрах ҫитĕнӳсем тунă. Титов, Савинов, Катюков юлташсем ертсе пыракан бригадăсем, Никифоров, Порфирьев, Егоров, Золотников, Казакова юлташсем тракторпа тумалли ĕҫсен планне 135—221 процент тултарнă. Баринов, Кудрин, Чернов юлташсем комбайнпа тырă вырмалли плана чылай иртерсе тултарнă. М. Афанасьев, И. Афанасьев юлташсем молотилкăпа 400 тонна ҫапас вырăнне 775—1.030 тонна ҫапнă. МТС тăвакан ĕҫсен пахалăхĕ чылай лайăхланнă, машинăсем чарăнса тăрасси те сахалланнă.

Райком пленумĕ парторганизаци ĕҫĕнче пысăк ҫитменлĕхсем пуррине те палăртрĕ. Партбюро идеологиллĕ ĕҫе кирлĕ пек хакламасть. Парторганизаци кадрсене воспитани парас, кадрсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес ĕҫе ҫителĕксĕр организациленĕ. 46 ҫынран 13 коммунист парти историйĕн кĕске курсне кружокра вĕренеҫҫĕ, ыттисен хăйсем пурăнакан ялсенче вĕренмелле пулнă. Анчах партбюро вĕсем мĕнле вĕреннине тĕрĕслесе пыман, ҫавăнпа та чылай коммунистсем ниҫта та вĕренмеҫҫĕ. Харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсем те хăйсен пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ.

Партбюро коммунистсене поручениесем памасть, парсан та ҫав ĕҫе тунипе тумаллине тĕрĕслемест. Трактор бригадисенчи партгруппăсене ячĕшĕн ҫеҫ организациленĕ, вĕсен ĕҫне партбюро ертсе пымасть.

МТС-ра массăллă-политикăллă ĕҫ вăйсăр. Партбюро партин XIX-мĕш съездĕн материалĕсене тата партипе правительство решенийĕсене ăнлантарса парас ĕҫе кирлĕ пек организацилемен. Нагляднăй агитаци ҫителĕксĕр.

Йышăннă обязательствăсене пурнăҫланине производствăлла канашлусенче сӳтсе явмаҫҫĕ, кăтарту хăмипе хисеп хăми ҫинче малта пыракансене палăртмаҫҫĕ.

Парторганизаци ҫамрăксене воспитани парас ĕҫе япăх ертсе пырать. МТС-ра ҫамрăксем нумай пулин те, комсомол организацийĕ 8 комсомолецран ҫеҫ тăрать.

Тракторсене юсасси япăх пырать. МТС администрацийĕ механизаторсен пурнăҫ условийĕсене лайăхлатас енĕпе нимĕн те тумасть. Механизаторсем валли темиҫе ҫул каярах туса лартнă ҫурт пурăнма юрăхсăр. Ăна юсама панă укҫапа усă курмаҫҫĕ. Халĕ мастерскойра ĕҫлекенсем тĕрлĕ хваттерсенче пурăнаҫҫĕ, е ĕҫ хыҫҫăн 7—8 ҫухрăма килĕсене ҫӳреҫҫĕ.

Райком пленумĕ парторганизаци ĕҫне пур енчен те тĕплĕн сӳтсе яврĕ. Доклад тăрăх 12 ҫын тухса каларĕ.

Тухса калакансем Чăваш АССР ялхуҫалăх министерствине те критиклерĕҫ. Ялхуҫалăх министерстви МТС-сене план ярса панă чухне колхозсене выльăх-чĕрлĕх фермисем тума йывăҫ турттарса парас ĕҫе пĕрте палăртмасть. Пурнăҫ малалла кайнине кура ҫак ĕҫе МТС-сен планне кĕртме кирлĕ.

Пленум йышăннă решенире, парторганизаци ĕҫне лайăхлатмалли майсене конкретлă кăтартса панă.

Ҫулпуҫăн гениллĕ ĕҫне вĕренеҫҫĕ

СОВЕТСКИ. Колхозниксемпе колхозницăсем тата машина-трактор станцийĕнчи механизаторсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕн материалĕсене, И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ произведенине пысăк интереспа вĕренеҫҫĕ. Парти райкомĕн штатра тăман докладчикĕсемпе пропагандисчĕсем тата ялсенчи лекторсем ҫак кунсенче агитпунктсенче колхозниксем валли докладсем туса параҫҫĕ тата лекцисем вулаҫҫĕ.

Партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсене вĕренме Андреев ячĕпе тăракан колхозра кружок тунă. Унта колхозниксем йышлă ҫӳреҫҫĕ. Ял ĕҫченĕсене ҫак кунсенче КПСС райкомĕн секретарĕ А. Альянов юлташ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» произведени ҫинчен лекци вуласа пачĕ. Альянов юлташ кун пек лекцие Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та вуларĕ. Ку колхозри чылай колхозниксем ҫулпуҫăн чаплă произведенине харпăр хăй тĕллĕн вĕренеҫҫĕ.

И. В. Сталин юлташăн гениллĕ ĕҫĕ ҫинчен Чемейри агитпунктра колхозниксем валли темиҫе лекци вуласа панă. КПСС райкомĕн пропагандисчĕ П. Смирнов юлташ «Социализмран коммунизма куҫмалли малтанхи условисем» тема тăрăх вуланă лекцие итлеме колхозниксем йышлă пынă. Агитпунктра КПСС райкомĕн штатра тăман пропагандисчĕ П. Дмитриев юлташ «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» произведени ҫинчен интереслă лекци вуларĕ.

Турайри, Тури Ачакри лекторисем ҫулпуҫăн гениллĕ ĕҫĕ ҫинчен лекцисем вулама план тунă. Халĕ кашни эрнерех тематикăллă лекцисем ирттереҫҫĕ.

Машина-трактор станцийĕнче партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсене коммунистсен, комсомолецсен пухăвĕнче сӳтсе явнă. Механизаторсем съезд решенийĕсене кружокра вĕренеҫҫĕ. Вĕсем валли партин XIX-мĕш съездĕн материалĕсем тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ ĕҫĕ ҫинчен темиҫе лекци вуласа панă.

Ялсенчи библиотекăсем тата вулав ҫурчĕсемпе клубсем партин XIX-мĕш съездĕн материалĕсемпе ҫулпуҫăн ҫĕнĕ произведенине вĕренекенсене пулăшма ятарласа витринăсем тунă.

Я. СИГАЕВ.

СССР гражданĕсен прависемпе обязанноҫĕсем

Сталинла Конституци тĕнчери чи демократиллĕ конституци пулса тăрать. Вăл совет гражданĕсене демократиллĕ правасемпе ирĕклĕхсем ҫинчен пĕлтерет кăна мар, ҫав правасемпе ирĕклĕхсене пурнăҫа кĕртме май парать. Сталин юлташ Пĕтĕм Союзри Советсен Чрезвычайнăй VIII-мĕш съездĕнче 1936 ҫулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче тунă докладра ҫапла каларĕ: пирĕн конституци «граждансен формальнăй прависене ҫырса хунипе кăна ҫаранмасть, вăл ҫав правăсене пурнăҫа кĕртмелли гарантисен ыйтăвне, ҫав правăсене пурнăҫа кĕртмелли средствăсен ыйтăвне тĕп вырăна лартать». Сталинла Конституци пĕлтернĕ тата пурнăҫа кĕртме май панă демократиллĕ правасемпе ирĕклĕхсем пирĕн государствăра кăна мар, пĕтĕм тĕнчипех пысăк вырăнта тăраҫҫĕ. Халăх демократи государствисен конституцийĕсене тунă чухне Сталинла Конституци ҫутă тĕслĕх пулса тăчĕ.

СССР Конституцийĕ ĕҫсыннисен прависене: ĕҫлев правине, канăҫ правине, вĕренӳ правине, ватăлсан, чирлесен, ĕҫлеймен пулсан материальнăй пулăшу илмелли правине законласа ҫирĕплетрĕ, хĕрарăма арҫынпа пĕр тан правасем пачĕ, пур гражданисене те, вĕсен национальноҫĕпе расине пăхмасăр, пĕр тан турĕ. Вăл ĕҫсыннисене сăмах ирĕклĕхĕ, пичет ирĕклĕхĕ, пухусемпе митингсем ирттермелли ирĕклĕх пачĕ.

Ĕҫлев прави СССР гражданĕсен пысăк ҫĕнтерĕвĕ пулса тăрать: СССР Конституцийĕн 118-мĕш статьинче ҫапла калать: «СССР гражданĕсен ĕҫлев прави пур, урăхла каласан, хăйĕн ĕҫĕшĕн, унăн пысăкăшĕпе пахалăхне кура, тӳленекен гарантиленĕ ĕҫ илмелли право пур». Ҫак правăна чăн-чăнах пурнăҫа кĕртме май паракан гаранти вăл халăх хуҫалăхне социализмла организацилени, совет обществин производительнăй вăйĕсем пĕрмаях ӳссе пыни, хуҫалăх кризисĕсем пулмалли майсене тата ĕҫсĕрлĕхе пĕтерни пулса тăрать. ССР Союзĕн экономикăллă никĕсĕ ĕҫлев правине пурнăҫа кĕртме май парать. Сталинла Конституципе ҫырса хунă тăрăх, хуҫалăхăн социализмлă системи тата производство орудийĕсемпе хатĕрĕсен социализмлă харпăрлăхĕ ССР Союзĕн экономикăллă никĕсĕ пулса тăраҫҫĕ.

Совет Союзĕнче ĕҫ мухтавлă та хисеплĕ. Пирĕн ҫĕршывра тӳрĕ кăмăлпа ĕҫлекенсене орденсемпе медальсем парса хавхалантараҫҫĕ, Социализмлă Ĕҫ Геройĕн хисеплĕ ятне параҫҫĕ. Отечественнăй вăрҫă хыҫҫăн рабочисене, колхозниксене, ученăйсене, инженерсемпе техниксене, служащисене 1 миллион та 500 пин ҫынна орденсемпе медальсем парса наградăланă. 6.500 ҫынна яхăн Социализмлă Ĕҫ Геройĕн ятне панă.

Пĕр буржуаллă государствăра та граждансене ĕҫлев прави пани ҫук. Уйрăм, капиталистла харпăрлăх ҫинче тытăнса тăракан хуҫалăхăн капитализмла системи ĕҫсыннисене ун пек право пама пултараймасть. Капитализмла ҫĕршывсенче ĕҫсĕрлĕх, чухăнлăхпа правасăрлăх ӳссе пырать. Хальхи вăхăтра Италире пĕтĕмĕшпех ĕҫсĕр юлнисем 2 миллион ҫын ытла шутланаҫҫĕ, вăхăтран вăхăта кăна ĕҫ тупакансем унтан та ытларах. Хĕвеланăҫ Германире пĕтĕмĕшпех ĕҫсĕр юлнисем тата вăхăтран вăхăта кăна ĕҫ тупакансем 3 миллиона яхăн, Бельгире ĕҫсĕр юлнă ҫынсем 300 пин, Японире 10 миллиона яхăн шутланаҫҫĕ. США-ра пĕтĕмĕшпех ĕҫсĕр юлнисем 3 миллионтан кая мар, вăхăтран вăхăта кăна ĕҫ тупакансем 10 миллион ҫын шутланать.

Сталинла аслă Конституци СССР гражданĕсене канăҫ прави парать. Канăҫ прави рабочисемпе служащисем валли сакăр сехетлĕ ĕҫ кунĕ тунипе, йывăр условисенче ĕҫлекенсен ĕҫ кунне ҫичĕ сехет тата ултă сехет таран чакарнипе, уйрăмах йывăр условиллĕ цехсенче ĕҫлекенсен ĕҫ кунне тăватă сехет таран чакарнипе, рабочисемпе служащисене ҫулсеренех ĕҫ укҫи тӳлесех отпуск парса тăнипе, ĕҫсыннисене усă курмашкăн санаторисем, канмалли ҫуртсем, клубсем нумай туса панипе пурнăҫа кĕрсе пырать.

Граждансен канăҫ прави ĕҫлев правипе тачă ҫыхăнса тăрать. Лайăх, сывă, культурăллă канни ĕҫсыннисен сывлăхне ҫирĕплетет, вĕсен ĕҫ тухăҫлăхне, творчествăллă пуҫарулăхне ӳстерет.

Совет Союзĕнче ĕҫсыннисене канăҫ правине пурнăҫа кĕртме лайăх условисем туса панă. Пирĕн ҫĕршывра рабочисемпе служащисем валли тĕнчере чи кĕске ĕҫ кунĕ тунă. Сталин юлташ ҫапла вĕрентет: социализмран майĕпен коммунизма куҫнă условисенче ĕҫ кунĕ татах та кĕскелмелле. Ҫапла вара, совет обществин членĕсен пур енĕпе те вĕренсе пĕлӳсем илме вăхăт ҫителĕклĕ пулать.

Совет Союзĕнче ĕҫсыннисем вăхăта культурăллă ирттереҫҫĕ. Совет государствипе профессиллĕ союзсем пирĕн ҫĕршывра кану ҫурчĕсем, клубсем, библиотекăсем, вулав ҫурчĕсем, стадионсем, паркесем, спорт площадкисем нумай туса пачĕҫ.

Сталинла Конституци тăрăх СССР гражданĕсем ватăлсан, чирлесен тата ĕҫлеймен пулсан материальнăй пулăшу илме пултараҫҫĕ. Ку право рабочисемпе служащисене государство шутĕнчен социальнăй страховани тунипе, ĕҫсыннисене медицина пулăшăвĕ тӳлевсĕрех панипе, ĕҫсыннисене усă курмашкăн курортсем нумай туса панипе пурнăҫа кĕрсе пырать.

Партипе правительство ĕҫсыннисен сывлăхне сыхлама ҫав тери тăрăшаҫҫĕ. Государствăн сывлăха сыхлас ĕҫе каякан расхочĕсем, социальнăй страховани укҫитенкинчен каякан расходсемпе пĕрле, 1951 ҫулта 26,4 миллиард тенке ҫитнĕ, вăл 1940 ҫулхи хисепрен 15,2 миллиард тенкĕ ытларах. Пирĕн ҫĕршывра халăха медицинăпа санитари пулăшăвĕ парасси ҫултан-ҫул лайăхланса, сарăлса пырать. Хуласемпе ялсенче 1951 ҫулта больницăсенчи койкăсен шучĕ, 1940 ҫулхипе танлаштарсан, 30 процент ӳснĕ. Пирĕн ҫĕршывра больницăсен, диспансерсен, санаторисен хисепĕ ӳссех пырать. Медицина пулăшăвне пысăк квалификациллĕ врачсем параҫҫĕ.

Патша Российĕнче 1913 ҫулта пурĕ те 19.800 врач кăна пулнă, Совет Союзĕнче хальхи вăхăтра 300 пин врач шутланаҫҫĕ. Чăваш республикинче врачсен хисепĕ, 1913 ҫулхипе танлаштарсан, 30 хут ӳснĕ.

Халăха медицина пулăшăвĕ парасси лайăхланнă май тата халăх пурнăҫĕ лайăхланса пынă май пирĕн ҫĕршывра юлашки ҫулсенче ҫынсем ҫураласси ӳсрĕ, чирлесси тата вилесси нумай чакрĕ.

Капитализмлă государствăсенче ĕҫсыннисене ĕҫлеймен пулсан е ĕҫсĕр юлсан пулăшу паракан государство системи ҫук. Буржуаллă государствăсенче 49 государствăра чирлесен пулăшу илме страховани туни, 41 ҫĕршывра ватлăха страховани туни, 53 ҫĕршывра ĕҫлеймен пулсан страховани туни ҫук. Буржуаллă ҫĕршывсенче медицина пулăшăвĕшĕн укҫа тӳлес пулать, ĕҫсыннисем медицина пулăшăвĕпе усă курма пултараймаҫҫĕ. Курортсемпа санаторисенче вара харампыр-эксплуататорсем кăна пулаҫҫĕ. США-ра страховани тума бюджетăн ҫур процентне кăна расходлаҫҫĕ, ҫав вăхăтрах вăрҫă расхочĕсем бюджетра 74 процент йышăнаҫҫĕ.

Совет халăхĕ тунă чаплă ҫĕнтерӳсенчен пĕри вăл Сталинла Конституци ҫирĕплетсе панă вĕренӳ прави пулать. Ку право пуҫламăш шкулсенче пурне те обязательнăй йĕркепе вĕрентнипе, ҫичĕ ҫул вĕренмелли шкулсенче тӳлеттермесĕр вĕрентнипе, аслă шкулсенче лайăх вĕренекенсене государство стипендийĕсем парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе, заводсенче, совхозсенче, машина-трактор станцисенче тата колхозсенче ĕҫсыннисене производство, техника, агрономи ĕҫне тӳлевсĕр вĕрентнипе пурнăҫа кĕрсе пырать.

Совет государстви халăха вĕрентсе ҫутта кăларма ҫав тери нумай укҫа-тенкĕ парса тăрать. Халăха вĕрентес ĕҫе каякан расходсем 1940 ҫулта 22,5 миллиард тенкĕ пулнă пулсан, 1951 ҫулта 57,3 миллиард тенке ҫитнĕ, урăхла каласан, 2,5 хут ытла ӳснĕ. Вăрҫă хыҫҫăнхи ҫулсенче кăна ҫĕнĕрен 23.500 шкул туса лартнă. Молдаван, Таджик, Туркмен, Киргиз ССР-ĕсен столицисенче тата Ужгород хулинче ҫĕнĕрен университетсем уҫнă. Революциччен Российăри 16 хулара кăна аслă шкулсем пулнă пулсан, халĕ ССР Союзĕнчи 270 хуласемпе ялсенче 887 аслă шкул шутланать.

СССР—пурте хутла пĕлекен ҫĕршыв. Совет Союзĕнче кашни виҫĕ ҫынтан пĕри вĕренет. Халĕ ССР Союзĕнче вĕренекенсен йышĕ 57 миллион ҫын шутланать. Пĕр Чăваш республикинче кăна кăҫалхи вĕренӳ ҫулĕнче тĕрлĕрен шкулсенче 200 пин ҫынна яхăн, урăхла каласан, 1913 ҫулхипе танлаштарсан, 7 хута якăн ытларах вĕренет. ССР Союзĕнчи аслă шкулсенче вĕренекен студентсен хисепĕ Европăри капитализма мĕнпур ҫĕршывсенчи студентсен хисепĕнчен 1,5 хут ытларах шутланать. 1952 ҫулта кăна аслă шкулсем халăх хуҫалăхĕн тĕрлĕ отраслĕсем валли 221 пин ҫамрăк специалист вĕрентсе кăларнă. Хальхи вăхăтра пирĕн ҫĕршывра аслă шкулсемпе вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсем 5,5 миллион ҫын, урăхла каласан, вăрҫăчченхи хисепрен 2,2 хут ытларах ĕҫлеҫҫĕ.

Партипе правительство наукăна аталантарассишĕн куллен тăрăшаҫҫĕ. ССР Союзĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕсен, лабораторисен тата наукăн ытти учрежденийĕсен хисепĕ ҫулсерен ӳссе пырать.

Ҫĕнĕ пилĕк ҫуллăх планра пурне те ҫичĕ ҫул вĕренмелли йĕркене пурнăҫласа пынипе пĕрлех вăтам пĕлӳ парассине анлă сарса яма палăртнă. Пилĕкҫуллăх вĕҫĕнче республикăсен столицисенче, республикăна пăхăнса тăракан хуласенче, область, край центрĕсенче тата пысăк промышленноҫлă центрсенче ҫичĕ ҫул вĕренес ĕҫрен пурне те вăтам пĕлӳ парас (вунă ҫул вĕрентес) ĕҫе куҫма задача лартнă.

Сталинла Конституци халăхсен национальноҫĕпе расине пăхмасăр, вĕсен пĕтĕм хуҫалăх, государство, культура тата обществăпа политика пурнăҫĕнчи пĕр танлăхне закон тăрăх ҫирĕплетсе пачĕ.

Хĕрарăма арҫынпа пĕр тан правасем пани—хĕрарăма ĕҫлев, ĕҫ укҫи тӳлевĕ, канăҫ, социальнăй страховани тата вĕренӳ тĕлĕшпе арҫынпа пĕр тан правасем панипе, амăшĕпе ача интересĕсене государство сыхласа тăнипе, нумай ачаллă хĕрарăмсемпе упăшкасăр амăшĕсене государство пулăшу панипе, хĕрарăма йывăр ҫын чухне ĕҫ укҫи тӳлесе отпуск панипе, ача ҫуратмалли ҫуртсем, ача яслисемпе ача сачĕсем нумай уҫнипе пурнăҫланса пырать.

Совет Союзĕнчи хĕрарăмсем, ытти совет ҫыннисем пекех, коммунизм строительствинче активлă ĕҫлеҫҫĕ.

Буржуалла обществăра хĕрарăмсемпе арҫынсен пĕр тан прависем ҫинчен ĕмĕтленме те май ҫук. Унта арҫынна панă правăсенчен нумайăшĕпе хĕрарăмсем усă кураймаҫҫĕ. Буржуаллă государствăсенчен нумайăшĕнче хĕрарăмсене суйлав прави памаҫҫĕ. Пĕр пек ĕҫшĕн хĕрарăмпа арҫынна пĕр пек ĕҫ укҫи тӳлемеҫҫĕ. США-ри 48 штатран 39-шĕнче хĕрарăмпа арҫынна пĕр пек ĕҫ укҫи тӳлесси ҫинчен нимĕнле закон та ҫук. Англири хĕрарăмсем арҫын ĕҫ укҫин 50—55 процентне кăна илсе тăраҫҫĕ.

Гектартан 50 центнер тырă илессишĕн

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн ĕçĕсем çинчен партин XIX-мĕш съезлĕнче тунă отчетлă докладра Г. М. Маленков юлташ тырпул тухăçлăхне ӳстересси — çĕрçĕнчи тĕп задача, тесе кăтартса пачĕ.

Çĕрĕç культурине çулсерен лайăхлатса, пирĕн колхоз яланах вăйлă тырпул туса илекен пулчĕ. Юлашки пилĕк çул хушшинче, вăтамăн шутласан, тĕштырăсене гектар пуçне 23 центнертан кая мар илни пулман, ырашпа çурхи тулă 30—40 центнер илсе тăнă. Пирĕн уйрăмах çурхи тулă пысăк тухăçлă пулать. 1951 çулта Социализмлă Ĕç Геройĕ И. С. Сакакин юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади 25 гектар çинче кашни гектартан 48 центнера яхăн çурхи тулă туса илчĕ.

Мĕнле майпа эпир кирек мĕнле çанталăкра та вăйлă тырпул туса илме пултаратпăр?

Вăйлă тырпул никĕсĕ — тĕрĕс йĕркеленĕ курăксем акмалли пусă çаврăнăшĕ. Унсăрăн тухăçлă тырпул туса илесси çинчен шутламалли те çук. 1931 çулта пирĕн колхоз çичĕ уйлă пусă çаврăнăшĕ пуçласа ячĕ. Çак пусă çаврăнăшĕпе эпир икĕ ротапи хушши ĕçлерĕмĕр. Анчах та кун пек пусă çаврăнăшĕ пире çырлахтарма пултараймарĕ. Ун пек пусă çаврăнăшĕнче сĕртме уйĕ канса выртаймасть. Курăксем акнипе çеремленнĕ тăпра сийĕпе тĕрĕс усă курма çук. Нумай çул ӳсекен курăксем çур уй кăна йышăнаççĕ, вăл та пулин иккĕмĕш çулнех сĕртме уйĕ пулса тăрать. Кунсăр пуçне, ку пусă çаврăнăшĕ çурхи тулă лаптăкне хĕссе пĕчĕклетсе пычĕ. Çавăн пирки вара 1946 çулта эпир вунă уйлă пусă çаврăнăшĕ пуçласа ятăмăр, икĕ уйне пĕтĕмпех нумай çул ӳсекен курăксем йышăнмалла турăмăр.

Ку пусă çаврăнăшĕ çурхи тулă лаптăкне аслăлатать, тĕштырăсем акмалли лаптăка чакармасăрах выльăх апачĕ çитерекле туса илме унăн лаптăкне ӳстерет. Курăксем акнипе çеремленнĕ уйсем тăпра структурине лайăхлатаççĕ.

Ырăша эпир таса тата хура сĕртме хыççăн, çурхи тырăсене кĕрхи сĕртме туса хăварнă лаптăк çине акатпăр. Кĕрхи сĕртме умĕн малтан яланах хăмăл сухи тăватпăр. Ирхи сĕртме сухине май уйăхĕпе июнь уйăхĕн малтанхи вунă кунĕнче, кĕрхи сĕртме сухине — августпа сентябрь уйăхĕсенче тăватпăр. Трактористсем, вĕсене хушнă тăрăх, кирек хăш сĕртме сухине тунă чух та суха касси тарăнăшне 30 сантиметртан кая илмеççĕ. Пирĕн колхоз хирĕсенче ĕçлекен трактор бригадине Социализмлă Ĕç Геройĕ И. Т. Пронькин юлташ ертсе пырать. Трактористсем суха кассине мĕн тарăнăш илсе пынине вăл хытă тĕрĕслесе тăрать, çавăнпа та ку йĕркене пăсни çак таранччен пирĕн пĕрре те пулман.

* * *

(Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕн заместителĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ П. Пупин юлташ каласа пани)

* * *

Сĕртме уйне эпир тислĕк нумай кăларатпăр: гектар çине 35—40 тонна. Сĕртме уйне çăвĕпех кăпка тытатпăр. Органически тата минераллă удобренисем нумай хывни — кирек мĕнле çанталăкра та пысăк тухăçлă тырпул туса илмелли чи кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать.

Суркунне пуçлансанах, шăннă тăпра ирĕлме тытăнсан, эпир кĕрхи тырă калчисене минераллă удобренисем сапса гектар çине 5—7 центнер апат паратпăр. Унтан вара, суха касси тăррисем кушăрхаса типсенех, тăпра сыпçăнми пулсан, зиг-заг сӳресемпе икĕ хут сӳрелесе тухатпăр. Çавăн пек сӳрелени калчасене хĕл хушшинче пĕтнĕ çулçăсенчен тасатать, калчасен сывлăшпа çутă режимне лайăхлатать. Çапла вара, калчасене сӳрелени вăйлă тырпул туса илес ĕçре пысăк усă парать.

Колхоз уйĕсенче нӳрĕ ытларах пухассишĕн хытă кĕрешетпĕр. Кĕрхи, хĕллехи, çурхи нӳрре пухса тытса юлма таран тунă кĕрхи сĕртме сухи нумай пулăшать. Нӳрĕ запасĕ ытларах сыхланса тăтăр тесе, калчасене сӳрелĕнĕ вăхăтрах çурхи тырăсем акма кĕрхи сĕртме туса хăварнă уйсене те сӳрелетпĕр. Унтан тата 10—12 сантиметр тарăнăш илсе çав уйсене пурне те культиваци тăватпăр. Çĕре çапла ĕçлесе хатĕрлесен, тăпрари нӳрĕ лайăх сыхланса юлать, вара çуркуннепе çу пуçламăшĕнче çумăрсем пачах пулмасан та калчасем йĕркеллех ĕрчесе ӳсеççĕ, тырпул вăйлă пулать.

Эпир нумайранпа ĕнтĕ кунти вырансемшĕн чи лайăх сорт шутланакан таса вăрлăхсем кăна акатпăр. Вĕсем çак сортсем: ыраш — «Казанская 5+6», çурхи тулă — «Лютесценс 62», урпа — «Виннер», сĕлĕ — «Диппе», «Казанская 5+6» сортлă ыраш пысăк тухăçлă пулать, уяр, типĕ çанталăка вăл парăнмасть.

Вăрлăхлăх уйăрнă тырă пахалăхне эпир питĕ пысăка хуратпăр. Çавăнпа та вăрлăх валли чи вăйлă пулнă участокран пухса кĕртнĕ шултра, йывăр пĕрчĕллĕ тырра кăна суйласа илетпĕр.

Вăйлă тырпул туса илессишĕн эпир пĕтĕм çулталăкĕпех кĕрешетпĕр. Хĕллехи агротехника ĕçĕсене пĕтĕмпех тăвассишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлетпĕр.

Хирти ĕçсене пирĕн колхозра пурне те пĕчĕк ушкăн е пĕччен сдельщина йĕркипе тăваççĕ.

Партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсемпе Сталин юлташăн «СССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» ятлă гениллĕ ĕçне вĕренни колхозниксен политикăллă тата ĕçри хаваслăхне çĕклерĕ.

Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхозри колхозниксем колхоз производствинче ку таранччен усă курман е сахал усă курнă резервсем тупса палăртаççĕ. Вĕсем пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план вĕçленнĕ тĕле тĕштырă культурисене кашни гектартан 50 центнер туса илессишĕн кĕрешме сăмах пачĕç. Ырашпа çурхи тулла эпир кăçалах гектартан 50 центнертан кая мар ӳстерсе илессишĕн кĕрешме пултăмăр. Панă сăмаха пурнăçа кĕртес тесе, эпир ырми-канми ĕçлетпĕр.

Ыраша эпир августăн 10—15-мĕшĕсенче акса хăвартăмăр. Çав уйри сĕртме сухине 32—35 сантиметр тарăнăш тунă, пĕтĕм лаптăкĕпех тислĕк нумай хурса лайăх çемçетнĕ, виçĕ хутчен культиваци туса хатĕрленĕ. Тислĕк кашни гектар çине, тăпра пахалăхне кура, 35 тоннăран пуçласа 50 тонна таран тăкнă. Пĕтĕм ыраша хĕреслĕ майпа «Казанская 5+6» сортлă вăрлăхпа акса хăвартăмăр.

Суркунне, уйсем юртан тасалсанах, ыраш калчине апат пама хатĕрленетпĕр. Тĕрлĕрен минераллă удобренисем сапса паратпăр. Кашни участока мĕн чухлĕ апат парасси çав участокри калчасем юр айĕнчен мĕнле тухнинчен килет, анчах та, вăтам шутпа, пĕр гектар çине паракан апат 7 центнер таран пулать.

Ыраш калчине апат панипе пĕрлех, çурхи тырăсем акма кĕрхи сĕртме туса хăварнă уйсене те минераллă удобренисем хывма хатĕрленетпĕр. Унта эпир кашни гектар çине азотлă удобренисем 2—3 центнер, фосфорлă удобренисем 3—4 центнер, калиллĕ удобренисем 1,5—2 центнер хыватпăр.

1953 çулта çуртрисем акмалли уйсене эпир йăлтах кĕрхи сĕртме туса хăварнă, касă тарăнăшне 35 сантиметра çитернĕ.

Пирĕн колхоз вăрлăх фондне чи лайăх, шултра, тутă, йывăр пĕрчĕллĕ тырпулсене суйласа хыврĕ. Вĕсене амбара хывиччен çумкурăк вăррисенчен тасатса сортланă пулин те, хĕле кĕрсен «Петкусы» тата «ВИМ-2» машинăсемпе иккĕмĕш хут тасатрăмăр. Çурхи тулă вăрлăхĕн шăтас пахалăхĕ 98—99 процента çитет, абсолютнăй (1.000 пĕрчĕ) йывăрăшĕ 33—35 грамм.

Хире тислĕк çуна çулĕпе ытларах кăларассишĕн çине тăрса ĕçлетпĕр. Хĕл кăçиччен сахалтан та 60 пин лав тислĕк кăларатпăр. «Тислĕк ытларах кăларатăн—амбара тырă ытларах хыватăн!»—тесе каланине эпир минутлăха та манмастпăр.

Иртерех аксан кăна вăйлă тырпул туса илессе шанма пулать. Çавăнпа та кăçал çурхи тĕштырăсене пирĕн колхоз 4—5 кунра акса пĕтерме палла туса хучĕ.

Лашасен ăратлăхне лайăхлатар!

Колхозра лашасем пăхас тĕлĕшпе эпĕ вунпĕр çул ĕçлетĕп ĕнтĕ. Çак вăхăт хушшинче лашасене мĕнле пăхса ӳстермеллине лайăх вĕренсе çитрĕм.

Иртнĕ çул эпир 12 кĕсререн 12 тиха илсе пăхса ӳстертĕмĕр. Халĕ пирĕн бригадăра пĕтĕмпе 14 кĕсре, вĕсем пурте пĕтĕ.

Кĕсресене пурне те ăратлă ăйăрпа чуптаратăп, çавăнпа та пирĕн лашасен ăратлăхĕ лайăхланнăçемĕн лайăхланса пырать.

Пĕтĕленнĕ кĕсресем çине пире охраннăй свидетельствăсем параççĕ, унта çак кĕсресемпе мĕнле ĕçсенче тата мĕнле усă курма юранине кăтартса параççĕ.

Кĕсресене чуптарнă хыççăн малтанхи ултă уйăх хушшинче ытти лашасемпе пĕр танах ĕçлеттеретпĕр. Лашасемпе пирĕн опытлă, вĕсене юратакан çынсем кăна ĕçленĕ пирки пĕр кĕсре те хăм пăрахса курман-ха. Чуптарни ултă уйăх иртнĕ хыççăн вĕсемпе хуçалăхри çăмăл ĕçсенче кăна усă куратпăр, инçе çула тухмастпăр. Хăмлас умĕн икĕ уйăх малтан тата хăмланă хыççăн икĕ эрне хушши кĕсресене ĕçрен пачах хăтаратпăр, çак вăхăтра вĕсене кашни кунах 4—5 сехет хушши уçăлтарса çӳретпĕр. Кĕсресем хăмланă вăхăтра вара эпир кунĕн-çĕрĕн витере хурал тăратпăр.

Тихасене ултă уйăх хушши амăшĕсемпе пĕрле тытса усратпăр. Ăратлă ăйăрпа чуптарнипе пулнă тихасем питĕ хăвăрт ӳссе пыраççĕ. Çавăнпа та вĕсене амăшĕн сĕчĕ çитеймест. Тихасем çирĕп та сывлăхлă, ĕçлеме пултаракан лашасем пулса çитĕнччĕр тесе, 2 уйăхран эпĕ вĕсене сĕлĕпе клевер ути парса тăрантарма тытăнатăп. Кашни тихана талăкне 500 грамм сĕлĕ тата 4 килограмм лайăх клевер утти паратăп.

Тихасене пурне те сыхласа усранăшăн тата лайăх пăхса ӳстернĕшĕн колхоз правленийĕ мана 1952 çулта, ĕçшĕн хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, 125 килограмм тĕштырă пачĕ. Çавăн пекех Сергеев юлташ 135 килограмм, Калинин юлташ 75 килограмм тĕштырă илчĕç.

Лашасемпе ĕçре тĕрĕс усă курасси çине эпир питĕ тимлĕ пăхатпăр. Ĕç лашисене пурне те яланхи ездовойсене çирĕплетсе панă, кашни лашан хăйĕн уттаврашĕ, урапа-çуна пур. Ут таврашне эпир витерех, лаша тăракан вырăнтах çакса усратпăр.

Кашни ĕç лашине эрнере пĕр кун кантаратпăр.

Çитĕнсе çитнĕ лашасене рацион тăрăх тăрантарса усратпăр. Талăкне кашни лашана 4 килограмм утта 2 килограмм çуртри улăмĕпе хутăштарса, 2 килограмм сĕлле пĕр килограмм туранă ыраш улăмĕпе хутăштарса паратпăр. Лашасене çавăн пек тăрантарса усрасан, вĕсемпе тĕрĕс усă курсан, кашни кун тасатсан, вĕсем яланах мăнтăр та тĕреклĕ пулаççĕ.

Ĕçшĕн пире лашасен мăнтăрлăхĕпе пахалăхне кура тӳлеççĕ. Колхоз правленийĕн членĕсемпе зоотехник кашни уйăхра лашасене пăхса тухаççĕ.

Кăçал эпĕ лашасене пурне те сыхласа усрама, кашни кĕсререн тиха илсе, вĕсене пăхса усрама, ĕç лашисене çураки валли лайăх хатĕрлеме обязательство илтĕм.

И. ПАВЛОВ,
аслă конюх.

Сĕнтĕр районĕ, Суворов ячĕпе тăракан колхоз.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Хаçат умстатьи

Умстатьян тĕп тĕллевĕ—ĕççыннисене Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви кăларса тăратнă задачăсем çинчен тĕплĕн ăнлантарасси тата çав задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕн тумаллине тĕплĕн кăтартса парасси. Районти хаçатсен хăйсен умстатьисенче социализмлă ялхуçалăхне, промышленноçа, культурăна малалла аталантарассипе çыхăннă ыйтусене тарăнăн та тăтăшах çутатмалла, коммунизм строительствинче малта пыракансен паха опытне анлăн сармалла, ĕçри çитменлĕхсене пур енчен те тишкерсе тухмалла.

Пирĕн республикăри районсенче тухса тăракан хаçатсенчен чылайăшĕ çак требованисене тивĕçтерекен умстатьясем сахал мар пичетлеççĕ. Сăмахран, Красноармейски районĕнчи «Коммунизм çулĕпе» хаçат (редакторĕ Л. Семенов юлташ) хăйĕн умстатьисенче хуçалăхпа культура строительстви ыйтăвĕсене тĕплĕн çутатать. Иртнĕ çулхи декабрĕн 18-мĕшĕнче пичетленнĕ «Паха вăрлăх—вăйлă тырпул никĕсĕ» ятлă умстатьяра хаçат районти колхозсенче çитес çуракинче акма вăрлăх фончĕсем тăвас ĕç мĕнле пулса пынине тĕплĕн тишкерет, ку тĕлĕшпе лайăх тĕслĕхсем кăтартакан ялхуçалăх артелĕсен опытне пĕтĕçтерет, юлса пыракансене сивĕччĕн критиклет, тĕрĕс выводсем тăвать, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса парать. Асăннă умстатьяра хускатнă ыйтăва тарăнрах çутатас тĕллевпе çак номертех «Çураки валли вăрлăхсем хатĕрлетпĕр», «МТС колхозсене вăрлăх тасатма пулăшмасть», «Вăрлăх хатĕрлеме васкамаççĕ» ятлă корреспонденцисем пичетленĕ. Çак çулхи январĕн 4-мĕшĕнче пичетленнĕ «Çамрăксен политвĕренĕвне — çулĕ пуçăма» ятлă умстатья та содержани енчен пуян, чĕлхе енчен çыпăçуллă.

Умстатьяри положенисене «Эпĕ занятисене мĕнле хатĕрленсе иртеретĕп», «Политикăна вĕренни çамрăксен ĕçри хастарлăхне ӳстерет», «Хамăн пĕлĕве ӳстерессишĕн тăрăшатăп» ятлă заметкăсемпе çирĕплетсе панă. Январĕн 8-мĕшĕнче пичетленнĕ «Парти вĕренĕвĕнчи тĕп задача», январĕн 18-мĕшĕнче пичетленнĕ «Вăрман хатĕрлевĕнчи татăклă тапхăр» умстатьясем те аван. «Коммунизм çулĕпе» хаçатра пичетленнĕ çулте асăннă умстатьясем республикăри пур райхаçатсемшĕн те лайăх тĕслĕх пулса тăраççĕ.

Хăшпĕр райхаçатсем умстатьясенче çĕкленĕ ыйтусене çиелтен çутатаççĕ, часчасах кивелнĕ, хăйсен пĕлтерĕшне çухатма ĕлкĕрнĕ темăсене хускатаççĕ. Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçат 1952 çулхи декабрĕн 7-мĕшĕнче «Авăн çапас ĕçе сывăх кунсенчех вĕçлемелле» ятлă умстатья пичетленĕ. Асăннă темăна хĕлле тин, авăн çапма тытăнни тăватă уйăх иртнĕ хыççăн тин хускатнинчен «Коммунар» хаçатăн редакцийĕ мĕн тери «оперативлă» ĕçлени курăнать. Кунсăр пуçне, ку умстатья çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтермелли майсене кăтартса памасть, конкретлă задачăсем лартмасть. Статьяна пĕр еврĕлĕ фактсемпе тултарса лартнă. Унта районти вунсакăр колхоз çинчен сăмах пырать. Пĕтĕмĕшпе илсен, ку умстатья фактсене регистрацилекен кичем информаци евĕрлĕ пулса тухнă. «Коммунарăн» ытти номерĕсенче пичетленнĕ умстатьясем пирки те çавнах калама тивет.

Умстатьяра фактсем нумай илсе кăтартни вырăнсăр. Унта уйрăмах палăракан фактсем пулмалла. Ахальтен мар ĕнтĕ «çичĕ факт ил те пĕр фактпа усă кур» теççĕ. Фактсене тĕплĕн тишкерсе тухса пĕтĕçтерни, тĕрĕс выводсем туни кирлĕ.

«Социализмлă ĕç» хаçат (Çĕмĕрле районĕ) вара час-часах хăйĕн умстатьинче пĕр факт та илсе кăтартмасть, никама та критиклемест, никамăн ĕçне те тивĕçлипе хакламасть. Хаçатăн январĕн 15-мĕшĕнче тухнă номерĕнче «Агитаторсен суйлав кампанинчи задачисем» ятлă умстатья пур. Анчах та унта агитациллĕ-массăллă ĕç районта мĕнле пулса пыни, мĕнле çитĕнӳсемпе çитменлĕхсем пурри çинчен пĕр сăмах та асăнман, пĕр тĕслĕх те илсе кăтартман.

Районти хаçатсенче час-часах е ытла пысăк, е питех те пĕчĕк умстатьясем пичетленнине курма пулать. «Коммунар» хаçатăн иртнĕ çулхи сентябрĕн 7-мĕшĕнче тухнă номерĕнчи умстатьяра 233 йĕрке. «Социализмлă ĕç» хаçатра августăн 24-мĕшĕнче пичетленнĕ умстатьяра 64 йĕрке кăна. Статья ытлашши вăрăм пулни унăн витĕмлĕхне тата пĕлтерĕшне нимĕн чухлĕ те ӳстермест.

Партин Центральнăй Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, районти хаçатăн кашни номерĕнчех умстатья пичетлемелле. Хăшпĕр хаçатсем çакна пурнăçа кĕртсе пымаççĕ, час-часах умстатьясăр тухаççĕ. Сăмахран, Тăвай районĕнчи «Сталин ялавĕ» хаçатăн иртнĕ çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕпе декабрĕн 7-мĕшĕнче кăларнă номерĕсенче умстатьясем çук.

Умстатья çырасси—ответлă та йывăр ĕç. Çак пархатарлă ĕçрен пăрăнма, хачăпа клей пулăшнипех умстатья «çырма» пикенекенсем те пур-ха районти хаçатсен редакторĕсем хушшинче. Çакна Пăрачкав районĕнчи «Знамя коммунизма» хаçатра январĕн 18-мĕшĕнче пичетленнĕ умстатьяпа çирĕплетсе пама пулать. Асăннă умстатьяна пирвайхи йĕркерен пуçласа вĕçне çитиччен «Советская Чувашия» хаçатра январĕн 13-мĕшĕнче пичетленнĕ умстатьяран çырса илнĕ.

Умстатья хаçатăн пĕтĕм сăн-сăпатне уçса парать. Вăл парти органĕсем йышăннă решенисене ăнлантарать. Çавăнпа та умстатьясене питех те пысăк ответлăха туйса тата пĕр васкамасăр çырмалла.

Пурне те палла, пирĕн вулакан кичем, пĕр еврĕлĕ чĕлхепе çырнă умстатьясене мар, ăнланмалла тата ансат, уçăмлă чĕлхепе çырнă умстатьясене кăна кăмăллать. Умстатьясене ячĕшĕн, хаçатри пушă вырăна мĕнле те пулин тултарас тесе çырни вулакансене хисеплеменни, хаçат умĕнче тăракан пархатарлă задачăсене пурнăçламанни пулать. Умстатьяна малтанах пăлăртса хунă план тăрăх, пухнă фактсене анализ тунă тата тĕрĕсленĕ хыççăн çырмалла. Статья çырма тытăниччен хаçат работникĕн колхозсенче, предприятисенче, учрежденисенче пулса выранти фактсемпе тĕплĕн паллашмалла. Районсенче тухса тăракан хаçатсен умстатьисене час-часах редакторĕ хăй çырать. Çавăнпа та унăн хаçатра çутатакан пур ыйтусем тĕлĕшпе те хăйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерсе пырассишĕн тимлĕн ĕçлемелле. Умстатьясем çырма районти ертсе пыракан работниксене, специалистсене хутшăнтарни те вырăнлă.

Умстатья—ĕççыннисене парти политикине ăнлантарса паракан, вĕсене умра тăракан задачăсене чыслăн пурнăçлама мобилизацилекен статья пулмалла. Çавăнпа та КПСС райкомĕсен райхаçат пичетлекен пур умстатьясене те тĕплĕн тишкермелле, хаçат редакцийĕсене шухăш енчен тарăн, чĕлхе енчен пуян, идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра тăракан умстатьясем çырма вĕрентмелле.

Кашни ĕнерен 2.000 литр сĕт

Эпĕ ĕне ферминче 1948 çултанпа ĕçлетĕп Малтанхи вăхăтра мана çирĕплетсе панă ĕнесем 700—800-шер литр кăна сĕт паратчĕç. Эпĕ ĕнесене малтанхи кунтан пуçласах тăрăшса пăхма пуçларăм. Хамăн пĕлĕве зоотехникăна вĕренмелли кружокра, унтан зоотехникăна вĕренмелли виçĕ çуллăх курсра вĕренсе ӳстерсе пытăм. Кунсăр пуçне мана ĕçре зоотехниксем нумай пулăшу параççĕ. Çавăнпа пĕрлех эпĕ малта пыракан доярксен опытне тимлĕн вĕренсе пыратăп. Çапла вара ĕнесем пăхас ĕçе лайăх вĕренсе çитрĕм Иртнĕ çул хама çирĕплетсе панă 13 ĕнерен 15 пăру илтĕм. Пăрусене зоотехника вĕрентнĕ пек тĕрĕс пăхса тата лайăх тăрантарса усранипе, вĕсен чĕрĕ виçи кунтан кун нумай хушăнса пычĕ.

Ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ те ӳссе пырать. 1952 çулта кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.928-шар литр сĕт суса илтĕм.

Ĕнесене пăрулас умĕн икĕ уйăх малтан сума пăрахатăп. Çав вăхăтра вĕсене лайăх пахалăхлă утă, силос, çĕрулми, сĕлĕ çăнăхĕ тата тăвар паратăп. Апатсене выльăха париччен лайăх хатĕрлетĕп: туранă улăма вĕри шывпа шӳтерсе посыпка сапса паратăп. Тепĕр чухне çемçетнĕ улăма пĕçернĕ çĕрулмипе, силоспа хутăштарса çитеретĕп.

Суллахи вăхăтра ĕнесене темиçе участока уйăрнă улăхра çӳретнĕ. Симĕс апат сахал чухне вика çулса çитернĕ.

Эпĕ пăхакан ĕнесем халĕ те сĕт нумай параççĕ.

Обществăллă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсен республикăри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса, 1953 çулта хама çирĕплетсе панă ĕнесенчен 2.000-шер литр сĕт суса илме сăмах патăм. Панă сăмаха эпĕ чыслăн пурнăçлассишĕн кĕрешетĕп.

У. ГАЛКИНА,
Вăрнар районĕнчи Хрущев ячĕпе тăракан колхозри доярка.

Пирĕн çĕршывра граждансен пĕртанлăхĕ никам тĕкĕнейми закон пулса тăрать. Совет халăхĕсем хушшинчи тăванла туслăх вăйланса пырать. Ленинпа-Сталинла наци политики пĕр наци тепĕр нацине пусмăрласа тăнине, нацисен хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчи танмарлăхне тĕпренех пĕтерме май пачĕ. Совет влаçĕ туса хунăранпа нацисем хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчен малалла кайнине пирĕн Чăваш республики те уççăн кăтартса парать. Революциччен пур енĕпе те кая юлса пынă Чăваш республики, совет влаçĕ туса хунăранпа тăванла вырăс халăхĕ пысăк пулăшу панипе, кая юлса пынине тĕпренех пĕтерчĕ, чечекленсе аталанакан автономиллĕ республикăсенчен пĕри пулса тăчĕ.

Капитализмлă çĕршывсенче нацисем пĕр тан правалă мар, унта халĕ те расăллă дискриминаци пулса пырать. Америка империалисчĕсем акăлчан йăхĕнчен тухнă халăхсене чи çӳлте тăракан наци тесе шутлаççĕ Çакăнпа витĕнсе вĕсем негрсене, индеецсене тата ытти нацисене те пĕр шеллемесĕр хĕсĕрлеççĕ. США-ра негрсем калама çук йывăр пусмăр тӳсеççĕ. Американ монополисем негрсене нимĕнле правасăр чурасем вырăнне шутлаççĕ. Акăлчан колонийĕсемпе доминионĕсенчи халăхсем чăтма çук йывăр пусмăрта пурăнаççĕ.

Сталинла Конституци СССР Союзĕнчи граждансен политикăллă ирĕклĕхне закон тăрăх çирĕплетсе пачĕ. Ĕççыннисен ирĕклĕхĕсем — сăмах ирĕклĕхĕ, пичет ирĕклĕхĕ, пухусемпе митингсем ирттермелли ирĕклĕх, урамра шествисемпе демонстрацисем тумалли ирĕклĕх туллин пурнăçланса пыраççĕ. Граждансене совесть ирĕклĕхĕ туса парас шутпа СССР Союзĕнче чиркĕве государствăран, шкула чиркӳрен уйăрнă. Пур граждансен те тĕн йăлисене тытса пыма та, тĕне хирĕç пропаганда тума та ирĕклĕх пур.

СССР Союзĕнчи граждансене обществăллă организацисене пĕрлешме право панă. Рабочи класăн тата ĕççыннисен ытти сийĕсен чи активлă та ăнлануллă граждансем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партине пĕрлешеççĕ. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ пĕр шухăшлă çынсен-коммунистсен хăйсен ирĕкĕпе пĕрлешнĕ боевой союзĕ пулса тăрать, вăл рабочи класăн, ĕç хресченĕсен тата ĕç интеллигенцин çыннисенчен организациленнĕ

Капитализмлă государствăсенче правасемпе ирĕклĕхсем пуян çынсен кăна пур. Ĕççыннисен вара политикăллă правасемпе ирĕклĕхсем пачах çук. Сталин юлташ партин XIX-мĕш съезĕнче çапла каланă: «Ĕлĕк буржуази либералла хăтланкаланă, буржуаллă-демократиллĕ ирĕклĕхсене хӳтĕленĕ, çапла майпа халăх хушшинче хăйĕн ятне сарнă. Халĕ вара либерализмран йĕрĕ те юлмарĕ. «Этем ирĕклĕхĕ» тени текех çук ĕнтĕ,—халĕ капитал тытакансен кăна этем прави пур тесе йышăнаççĕ, ытти мĕнпур граждансене вара эксплуатацилеме çеç юрăхлă этемле чĕрĕ материал вырăнне хураççĕ. Çынсемпе нацисен пĕр тан правалăх принципне таптаса тăкнă, ăна граждансен эксплуатацилекен сахалрахăшĕ туллин правалă пулмалла тата граждансен эксплуатациленекен ытларахăшĕ правасăр пулмалла текен принциппа улăштарнă. Буржуаллă-демократиллĕ ирĕклĕхсен ялавне аяккалла кăларса ывăтнă».

Сталинла Конституци СССР Союзĕнчи граждансен прависемпе ирĕклĕхне çирĕплетсе панисĕр пуçне, вĕсем çине пысăк обязанноçсем хурать.

СССР Союзĕнчи пур граждансем те пĕр тан обязанноçсем пурнăçласа пыраççĕ. Социализмран коммунизма майĕпен куçса пынă вăхăтра Конституципе совет законĕсене пăхăнса тăни, ĕç дисциплинине çирĕплетни, государствăпа общество умĕнчи тивĕçсене пурнăçласа пыни уйрăмах пысăк вырăн йышăнать Çавăнпа та ĕнтĕ Конституцин 130-мĕш статьи СССР Союзĕнчи граждансене Конституцине пăхăнса тăма, законсене пурнăçа кĕртсе пыма, ĕç дисциплинине çирĕп пăхăнма, обществăшăн тивĕçлине тӳррĕн туса пыма, социализмлă пĕрлешӳллĕ пурнăç йĕркисене хисеплеме хушать.

Совет государстви обществăллă социализмлă харпăрлăха тĕреклетессишĕн куллен тăрăшать. Обществăллă социализмлă харпăрлăх—совет стройĕн чи таса, никам тĕкĕнмелле мар никĕсĕ, хамăрăн Тăван çĕршыв пуянлăхĕпе хăвачĕн çăлкуçĕ, мĕнпур ĕççыннисен пуян та культурăллă пурнăçĕн çăлкуçĕ пулса тăрать. СССР Союзĕнчи кашни гражданин обществăллă социализмлă харпăрлăха упрама та тата ăна тĕреклетме тивĕç. Обществăллă, социализмлă харпăрлăха тĕкĕнекен çынсем халăх тăшманĕсем пулса тăраççĕ.

СССР Союзĕнчи гражданесемшĕн çар службиhисеплĕ тивĕç пулса тăрать. Сталинла Конституци Тăван çĕршыва сыхлассн СССР Союзĕнчи граждансен чи таса тивĕçĕ пулни çинчен калать. Тăван çĕршыва пăрахса тăшмана сутăннăшăн: присягăна пăснăшăн, тăшман енне куçнăшăн, государствăн çар вăй-хăватне сиен кӳнĕшĕн, шпионла ĕç тунăшăн, пирĕн çĕршывра чи йывăр та усал ĕç туни вырăнне шутласа, законăн мĕнпур хаярлăхĕпе айăплаççĕ.

Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем совет гражданĕсен мирлĕ пурнăçĕпе ĕçне хӳтĕлесе тăраççĕ. Кунпа пĕрлех вĕсем пĕтĕм тĕнчери мире сыхлаççĕ.

Сталинла Конституци СССР Союзĕнчи граждансене тĕнчери чи демократиллĕ правасемпе ирĕклĕхсем пачĕ. Совет Союзĕнче кăна ĕççыннисем çак правасемпе анлă усă курма пултараççĕ. Совет халăхĕ—социализм çĕнтернĕ çĕршывăн халăхĕ Сталинла Конституци ялавĕ айĕнче, Коммунистсен паттăр партийĕ, аслă çулпуçăмăр тата учителĕмĕр Сталин юлташ ертсе пынипе коммунизм çулĕпе шанчăклă малалла пырать.

П. КРЫСИН,
Пĕтĕм Союзри наукăпа политика пĕлĕвĕсем сарас тĕлĕшпе ĕçлекен обществăн действительнăй членĕ.

Фермăра ĕçлекенсен обязательствисем

ИШЛЕЙ. Районти колхозсенчи фермăсенче пин çынна яхăн ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре малта пыракансен республикăри канашлăвĕ чĕнсе калани çине ответлесе, халĕ вĕсем конкретлă обязательствăсем илеççĕ.

«За коммунизм» колхозри Татьяна Сурновăпа Вера Любимова дояркăсем ĕнесенчен ытларах сĕт суса илессишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Вĕсем 20-шер ĕне пăхаççĕ. Иртнĕ çулта кашни сăвакан ĕнерен 1.300-шер литр сĕт суса илнĕ. Сакăр çул хушши фермăра ĕçлекен Татьяна Сурнова 1953 çулта кашни ĕнерен 1.450 литртан кая мар, Вера Любимова 1.400 литртан кая мар сĕт суса илме пулчĕç. Çавăн пекех Зоя Егоровăпа Христина Сармасова хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесене лайăх пăхса усрама, кашни ĕнерен пăру илсе, вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса çитĕнтерессишĕн тăрăшса ĕçлеме сăмах пачĕç. Хальхи вăхăтра вĕсем фермăри ĕнесенчен 31 пăру илнĕ, вĕсем самăр та таса çитĕнеççĕ.

«За коммунизм» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе районта малта пырать пулсан та, иртнĕ çулта вăл вăтам шутпа кашни ĕнерен пурĕ те 982,7 литр сĕт çеç суса илнĕ. Çавăнпа фермăри работницăсем хальхи вăхăтра тăрăшсах зооветеринари правилисене вĕренеççĕ. Зоотехника курсĕн руководителĕ В. Романова юлташ ертсе пынипе ку таранччен 10 заняти ирттернĕ.

Çавăн пекех «Знамя труда», «Урожай», «Коминтерн» тата ытти колхозсенчи фермăсенче ĕçлекенсем те ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешеççĕ, малта пыракансен опытне тимлĕн вĕренеççĕ. «Знамя труда» колхозри доярксем ĕнесенчен ытларах сĕт суса илес енĕпе, 1952 çулхи кăтартусем тăрăх, районта пĕрремĕш вырăн йышăннă. Вĕсем вăтамран кашни ĕнерен 1.216,4 литр сĕт суса илнĕ. Çак колхозри Марфа Ярчеева дояркă хăйне çирĕплетсе панă 7 ĕнерен кашниниченех кăçал 1.500 литр сĕт суса илме сăмах панă.

В. ЧЕРНОВ.
Ф. МАЛЫШКИН.

„Коммунизм ялавĕ“ хаçатра çырнă хыççăн

„Хĕрача ашшĕне шырать“

Красноармейски районĕн прокурорĕ январĕн 6-мĕшĕнче «Коммунизм» ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ «Хĕрача ашшĕне шырать» ятлă çырура фактсене тĕрĕс кăтартса пани, хăйĕн хĕрне пăхманшăн П. Кондратьева суд урлă ответ тыттармалла туни, ĕçе Красноармейски районĕн халăх судне пани çинчен пĕлтернĕччĕ.

Красноармейски районĕн халăх судйи Андреев юлташ çак ĕçе январĕн 13-мĕшĕнче пăхса тухни çинчен пĕлтерчĕ. Кондратьевран унăн хĕрĕ Вера валли алимент шыраса илмелле, хĕрĕ 18 çул тултаричченех ĕç укçинчен 25 процент чухлĕ тӳлеттермелле тунă.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Шăхасан районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсни, колхоза ертсе пыракансен ответсăрлăхне пула арпа-улăм нумай сĕртсе яни, кантăр çапса пĕтермени, çĕрулмипе купăста шăнтса яни, выльăх-чĕрлĕх шучĕ чакса пыни çинчен çырнă заметкăна «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Шăхасан районĕнчи ялхуçалăх пайне янăччĕ.

Ялхуçалăх пайĕ Маленков ячĕпе тăракан колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсни çинчен район Совет исполкомĕн ларăвĕнче сӳтсе явни çинчен пĕлтерчĕ. Районти прокурора Никифоров юлташа колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсса ĕçленине, арпа-улăм сĕртсе, çĕрулмипе купăста шăнтса, выльăх-чĕрлĕх шутне чакарса колхоза пысăк сиен тунине тĕплĕ тĕрĕслеме, айăплисене уголовнăй йĕркепе ответ тыттармалла тума хушнă.

Район Совет исполкомĕ çак ыйтупа йышăннă решение тата «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕнчен янă çырура асăннисене тĕрĕсленине январĕн 19-мĕшĕнче колхоз правленийĕн ларăвĕнче сӳтсе явнă. Правлени ларăвĕ çырура асăннă çитменлĕхсене кĕске вăхăтра пĕтерме, тырпулсемпе техникăллă культурăсем вăхăтра пухса кĕртмесĕр тата сĕртсе ярса сиен кӳнĕ çынсене тивĕçлипе ответ тыттарма йышăннă. Выльăхсене пăхас ĕçе кирлĕ пек йĕркелеменшĕн, специалистсем хушнисене пурнăçа кĕртсе пыманшăн фермăсен заведующине Яковлева вырăнтан кăларнă.

* * *

Шупашкар районĕнчи Щербаков ячĕпе тăракан колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе тивĕçлипе йĕркелемени, колхоз клубне çĕрулми тата купăста тултарни, юлашки вăхăтра кунта чăх-чĕп усрама тытăнни çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине çыру килнĕччĕ.

КПСС райкомĕ çырура çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани, клубпа тĕрĕс усă курма тивĕçлĕ мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Хальхи вăхăтра клуб план тăрăх ĕçлеме тытăннă, клубра агитациллĕ-массăллă ĕçе йĕркеленĕ.

* * *

КПСС Чкаловски райкомĕ пĕлтернĕ тăрăх, «Пламя Октября» колхозри «Коммунизмшăн» стена хаçачĕн редколлегине çĕнĕрен суйланă, хаçат ĕçне лайăхлатасси çинчен канашлура сӳтсе явнă. Халĕ стена хаçачĕ йĕркеллĕ тухса тăрать.

Стена хаçачĕн ĕçĕ çинчен парторганизаци пухăвĕнче сӳтсе явма йышăннă.

Тĕнчери лару-тăру

ХАЛĂХ ÇАРНЕ ТУНĂРАНПА ПИЛĔК ÇУЛ ТУЛТАРНĂ

Февралĕн 8-мĕшĕнче Корея халăхĕ хăйĕн мухтавлă Халăх çарне тунăранпа пилĕк çул тултарнине савăнăçлăн паллă турĕ. Корея Халăх çарне тунин историйĕ Корея халăхĕн хăйĕн наци никама пăхăнманлăхĕшĕн Япони оккупанчĕсемпе Америка интервенчĕсене хирĕç пыракан кĕрешĕвĕпе уйрăлми çыхăннă. Корея халăх геройĕ Ким Ир Сен организациленĕ партизансен отрячĕ, Япони захватчикĕсене хирĕç нумай çулсем хушши паттăррăн кĕрешнĕ отряд, Халăх çарĕн пуçламăшĕ пулнă. Çак отрядра Халăх çарĕнчи хальхи нумай командирсем ÿссе воспитани илнĕ. Совет Çарĕн чаçĕсем Çурçĕр Корейăна ирĕке кăларни тата Демократиллĕ Корея Халăх Республикине туса хуни Корейăн историйĕнче пĕрремĕш хут чăнчăн Халăх çарĕ тума кирлĕ условисем туса панă. Çак паллă событи 1948 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче пулнă.

Хăйĕн çамрăк государствин ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне тăвас, мирлĕ строительство валли кирлĕ условисем туса парас шутпа Корея халăхĕ хăйĕн çарне тунă.

Йывăр çулсенче, Корея халăхĕн ылханлă тăшманĕсем—Америка империалисчĕсем тата Ли Сын Ман тарçисем—Демократиллĕ Корея Халăх Республики çине тапăнсан, Халăх çарĕ хăйĕн Тăван çĕршывĕн чысĕшĕн, ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн тăма пултарнине кăтартса панă. Халăх çарĕ интервентсем хĕссе пынине чарса лартнă кăна мар, вĕсене темиçе хутчен хăватлăн пырса çапма пултарнă Китай добровольцĕсен отрячĕсемпе пĕрле çапăçса, Халăх çарĕ интервентсене Çурçĕр Корейăран хăваласа кăларнă.

Вăрçă пуçланнăранпа икĕ çул çурă иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче интервентсем питĕ пысăк çухатусем тÿснĕ. Вĕсен 736 пин çын ытла вилнĕ тата аманнă, тыткăна лекнĕ. Вăл шутран американецсем 322 пин салтакпа офицер çухатнă. Халăх çарĕн боецĕсем тата Китай добровольцĕсен отрячĕсем американецсен çичĕ пине яхăн самолетне персе ÿкернĕ тата сиенленĕ, икĕ пин танкне пĕтернĕ, тăшманăн 48 карапне шыва путарнă, 43 карапне сиенленĕ.

Интервентсем Халăх çарĕн оборонине тĕрлĕ майпа татма хăтланни кăлăхах пулать. Интервентсем хальхи вăхăтра, тарăхнипе ним тăваймасăр, 38-мĕш параллелĕн районĕнче пĕр вырăнта тапăртатса тăраççĕ, фронт линине хăйсене кирлĕ пек нимĕн чухлĕ те улăштарма пултараймаççĕ. 1952 çулта Америка агрессорĕсем тата вĕсен сателличĕсем пĕр хут кăна мар Халăх çарĕн оборонине татма хăтланнă. Анчах вĕсен ĕçĕсем путланса ларнă. Хăйсен ĕçĕсем ăнăçсăр пулнипе тарăхса, Вашингтонăн влаçра тăракан çыннисем кăçалхи январь уйăхĕнче Ван Флит генерала—Корейăри 8-мĕш армийĕн командующине вырăнтан кăларма решени йышăннă.

Вăрçă икĕ çул çурă пынă вăхăтра Корея Халăх çарĕ ÿссе тĕрекленнĕ, кĕрешÿре пиçĕхнĕ. Унăн ретĕсенче—пиншер герой-патриотсем. Вĕсем хăйсен Тăван çĕршывĕн никама пăхăнманлăхне паттăррăн хÿтĕлеççĕ. Талантлă командирсем ÿссе воспитани илнĕ. Вĕсем çапăçура питĕ пысăк опыт пухнă, хальхи вăрçăн йывăр условийĕсенче вăрçă вăрçмалли ăсталăха вĕренсе çитнĕ. Халăх çарĕ халĕ нихçанхинчен те вăйлă. Вăл хăй тăтăклăн çĕнтерессине хальхи кунсенче нихçанхинчен те ытларах ĕненсе тăрать.

Сталин юлташ 1951 çулхи февраль уйăхĕнче «Правда» корреспонденчĕпе калаçнă чухне çапла каланă: «Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хăйсен хăрушсăрлăхне Корея территорийĕпе Китай чиккисем патĕнче хÿтĕлеме право пур тесе, Китайпа Корейăн вара хăйсен хăрушсăрлăхне хăйсен территорийĕнче е хăйсен государствин чиккисем патĕнче хÿтĕлеме право çук, тесе салтаксене ĕнентерме хĕн. Англипе Америка салтакĕсем вăрçа кăмăлламанни çакăнтан килет ĕнтĕ». Çавăнпа ĕнтĕ интервентсен вăрă-хурахла лагерĕнче эпир çакна куратпăр: вăрçăра поражени тÿсни пĕр вырăнта тĕлсĕррĕн тапăртатса тăни, перспектива пулманни салтаксен шухăш-кăмăлне хытă пăсать.

Салтаксем ытларах та ытларах çакна ăнланса пыраççĕ: вĕсем хутшăнакан вăрçă тĕрĕслĕхлĕ мар, ют çĕрсене тытса илмелли, çаратуллă вăрçă пулса тăрать. Çавна пула салтаксен çапăçас хастарлăхĕ чакать, çапăçăва кĕме килĕшменни ÿсет, çапăçу хирĕнчен, çартан тарасси нумайланать. Ют çĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, Корейăра вăрçă пуçланнăранпа Америкăн 49 пин салтакĕ çартан тарнă!

Хăйсен ĕçĕ тĕрĕс пулнине ĕненсе тăни, хăйсен Тăван çĕршывне хÿтĕлессишĕн тата хăйсен никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварассишĕн патриотла тăрăшни—çакă вăл Корея Халăх çарĕн никам çĕнтерейми вăйĕн çăлкуçĕ пулса тăрать. Паттăр çара хăйĕн тĕрĕслĕхлĕ ĕçĕнче пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх моралĕ пулăшу парать, унăн кĕрешĕвне кăмăллать.

НАЧАР АТАЛАННĂ ÇĔРШЫВСЕН ИНТЕРЕСĔСЕНЕ ХÿТĔЛЕСЕ

Январь вĕçĕнче Бандунгра (Хĕвеланăç Ява) ООН Экономикăллă комиссийĕн Азипе Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи суту-илÿпе промышленность енĕпе ĕçлекен Комитечĕн пиллĕкмĕш сессийĕ уçăлнă. Ку сесси хыççăн февралĕн 6-мĕшĕнче Азипе Инçет Хĕвелтухăçĕнчи суту-илÿпе промышленность енĕпе ĕçлекен Экономикăллă комиссийĕн 9-мĕш сессийĕ уçăлнă. 5-мĕш сессин кун йĕркинче 9-мĕш сесси валли нумай ыйтусем тăрăх сĕнÿсем хатĕрлеме палăртнă пулнă. Вăл ыйтусем начар аталаннă çĕршывсемшĕн питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăл ыйтусенчен чи паллăраххисем Азипе Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче минераллă ресурссене аталантарасси тата ку çĕршывсене промышленность оборудованийĕ парса тăрасси çинчен лартнă ыйту пулнă.

Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче промышленность начар аталаннă. Промышленность начар аталанни вăл çĕршывсен пĕтĕмĕшле экономики кая юлнине тата ĕççыннисен пурнăç условийĕсем япăххине палăртать. Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче çĕр айĕнчен кăлармалли пурлăхсен—тимĕр рудин, сайра-хутра тĕл пулакан металсен, нефть запасĕсем питĕ нумай. Çак пуянлăхсемпе пĕлсе усă курни Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене промышленность енĕпе аталантармалли тата вĕсем экономика тĕлĕшпе юлса пынине пĕтермелли, вăл çĕршывсенчи халăхсен пурнăç условийĕсене лайăхлатмалли çирĕп база туса хума пултарĕччĕ.

Çакна тума мĕн чăрмантарать-ха? Совет Союзĕн çав Комитетри представителĕ кăна вăл ыйту çине уçăмлă тата тĕплĕ ответ панă. Совет представителĕ çакна кăтартса панă: Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсем экономика тĕлĕшĕнчен юлса пыни çутçанталăк пуянлăхĕсем вĕсен аллинче пулманнинчен килет. Вăл пуянлăхсем ют çĕршывсенчи çăткăн монополисен, тĕпрен илсен, Америкăпа Англи монополийĕсен аллинче тăраççĕ. Монополистсем хаклă чĕртавара илсе тăраççĕ, вĕсем çав чĕртаварпа хăйсен промышленноçне кăна тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Америкăри «Интернейшнл маркитс» журнал иртнĕ çулта çакна йышăннă: Пĕрлешÿллĕ Штатсем валли ют çĕршывсенчен илсе килекен «стратегиллĕ дефицитлă таварсен» 73 процентне начар аталаннă çĕршывсем парса тăраççĕ.

Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче кăларакан чĕртавар пĕтĕмпе тенĕ пекех ют çĕршывсене тухса каять. 1951 çулта Индире 1.200 пин тонна марганец руди кăларнă. Ăна пĕтĕмпе тенĕ пекех ют çĕршывсене илсе кайнă. Таиландра, Бирмăра тата ытти çĕршывсенче кăларакан тăхлан рудине те, пĕтĕмпе тенĕ пекех, урăх çĕршывсене илсе каяççĕ.

Çакăн пек çаратуллă политика тытса пынă пирки Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчи чĕртавар запасĕсем Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчи нациллĕ промышленноçа аталантарнă çĕре мар, Америкăпа Англи монополисчĕсене пуйтарма кăна каяççĕ.

Ку çĕршывсем халĕ те капитализмлă пысăк державăсен чĕртавар парса тăракан çĕршывсем кăна пулса тăраççĕ. Империалистла державăсем начар аталаннă çĕршывсемпе суту-илÿ тунă чухне çакна асра тытаççĕ: вăл çĕршывсем экономика тĕлĕшĕнчен кая юлнине çирĕплетмелле, вĕсен нациллĕ промышленноçне аталантарма чармалла. Капитализмлă державăсем начар аталаннă çĕршывсенчен чĕртавар илсе тăраççĕ, çав вăхăтрах вĕсене машина оборудованийĕ парса тăма килĕшмеççĕ. Вырăнти промышленноçа аталантарма пулăшакан машинăсем вырăнне, империалистла державăсем промышленноçăн хатĕр изделийĕсене парса тăраççĕ. Çапла майпа çав çĕршывсенчи начар аталаннă промышленность производствине те пĕтерсе лартаççĕ.

Капитализмлă державăсем тулашри суту-илÿре Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене çаратас политика тытса пыни çинчен çакăн пек сведенисем кăтартса параççĕ. 1952 çулхи пĕрремĕш çур çулта Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен тулашри суту-илĕвĕн балансĕн дефицичĕ 625 миллион доллар пулнă. Промышленность таварĕсене хаклă хакпа сутăн илнĕ тата хăйсен чĕртаварне йÿнĕ хакпа сутнă май, начар аталаннă çĕршывсен 1952 çулхи пĕрремĕш çур çулта США-па тунă суту-илÿре кăна 235 миллион доллар дефицит пулнă. Суту-илÿре Азипе Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсем умне тан мар условисем лартса, США çав вăхăтрах вĕсене Совет Союзĕпе тата халăх демократи çĕршывĕсемпе суту-илÿ тума чарма тăрăшать.

Промышленноçпа суту-илÿ ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен Комитетăн сессийĕнче совет представителĕ подкомитетсем тăратнă сĕнÿсене критикленĕ. Мĕншĕн тесен вăл сĕнÿсенче США-па Англин Азипе Инçет Хĕвелтухăç районĕнчи политикин колонизаторла тĕллевне пытарнă. Совет представителĕ çав вăхăтрах ООН Экономикăллă комиссийĕн Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи суту-илÿпе промышленность енĕпе ĕçлекен Комитетăн ĕçĕсен уçăмлă та паллă программине кăтартса панă, вăл программăна çак орган умĕнче тăракан задачăсемпе килĕштерсе тунă. Совет представителĕ çакна кăтартса панă: ООН Экономикăллă Комиссийĕн Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи суту-илÿпе промышленность енĕпе ĕçлекен Комитетăн мĕнпур органĕсем, уйрăммăн илсен, суту-илÿпе промышленность ыйтăвĕсем енĕпе ĕçлекен орган, хăйсен ĕçне Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен наци интересĕсене хÿтĕлессипе çыхăнтармалла, вăл çĕршывсене монополисем çаратса пурăннинчен хăтармалла, хăйсен çутçанталăк пуянлăхĕсене тĕпчесе пĕлме май памалла, вăл пуянлăхсемпе наци экономикине аталантарнă çĕрте усă курмалла. Совет представителĕ çапла тума чĕнсе каланă: аслă державăсен Азипе Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсемпе пĕр тан условисемпе, пĕр-пĕриншĕн усăллă суту-илÿ тумалла. Суту-илÿре пĕр енлĕ çыхăнусем вырăнне нумай енлĕ çыхăнусем тумалла. Çавна май совет представителĕ çакна кăтартса панă: Совет Союзĕ Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсене вĕсем ют çĕршывсене ăсатакан яланхи таварсемпĕн промышленность оборудованийĕ парса тăма хатĕр.

Индонези общественноçĕ промышленноçпа суту-илÿ Комитечĕн ĕçĕсене тимлĕ сăнаса пырать. Хаçатсем çапла паллă тăваççĕ: Совет Союзĕ колонисен тата пăхăнса тăракан çĕршывсен интересĕсене хÿтĕлет. «Хариан ракят» хаçат, сăмахран, çапла çырать: «Совет представителĕ калани Индонези халăхĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать, мĕншĕн тесен унăн сăмахĕ Индонези халăхĕн требованийĕсемпе килĕшсе тăрать... Индонези халăхĕ çакна туйрĕ: ют çĕршыв капиталĕ унăн çĕршывĕнчи çутçанталăк пуянлăхĕсене контроллесе тăнă чухне тата вĕсемпе усă курнă чухне наци экономикине кирлĕ пек тума питех те йывăр».

Совет делегацийĕ империалистсем ООН Экономикăллă Комиссийĕн Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи суту-илÿпе промышленность енĕпе ĕçлекен Комитетĕнчен хăйсен колониллĕ политикин хĕçпăшалĕ туса хума хăтланнине хирĕç çине тăрса кĕрешет. Çакă вăл Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенчи халăхсен интересĕсемпе килĕшсе тăрать.

П. ФРОЛОВ.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем тăшмана хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕн тата Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем мĕнпур фронтсенче тăшмана хирĕç артиллерирен персе тăнă.

Ĕнер çĕрле Америкăн сывлăшри вăрă-хурахĕсем Пхеньянри çынсем пурăнакан кварталсем çине пырса тапăннă, тискеррĕн бомбăсем пăрахнă. Халăх хушшинче вилнисемпе аманнисем нумай, пурăнмалли çуртсемпе землянкăсене нумайăшне ишĕлтернĕ.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ÿкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

Ким Ир Сена Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Маршалĕ ятне панă

ПХЕНЬЯН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пхеньянри радио паян Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх Пухăвĕн Президиумĕн Указĕ çинчен пĕлтернĕ. Вăл Указ тăрăх, Корея Халăх çарĕн Верховнăй главнокомандующине Ким Ир Сен юлташа Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Маршалĕ ятне панă.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Аслă Халăх Пухăвĕн Президиумĕн Указĕ тăрăх, Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнă май, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин наци оборонин министрне Цой Ен Ген юлташа çар званийĕ—Демократиллĕ Корея Халăх Республикин вице-маршалĕ ятне панă.

Корея Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнине Корея халăхĕ савăнăçлăн уявланă

ПХЕНЬЯН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Корея халăхĕ хăйĕн хĕçпăшаллă вăйĕсене — Халăх çарне тунăранпа пилĕк çул тултарнине паян савăнăçлăн уявланă.

Пхеньян, Вонсан, Саривонь, Аньчжу, Синьчхонь тата ытти хуласенчи урамсенче: «Сывă пултăр Ким Ир Сен маршал!», «Халăхăн паттăр çарне—мухтав!», «Китайăн паттăр халăх добровольцĕсене — мухтав!» тесе çырнă лозунгсем çакнă.

Уяв умĕнхи кунсенче Пхеньянра тата ытти хуласенче, ялсенче, çар чаçĕсенче, Корея Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнă ятпа савăнăçлă пухусем пулса иртнĕ. Пхеньянра фотовыставка уçнă. Выставка Халăх çарĕн мухтавлă çулĕ çинчен каласа парать. Çар чаçĕсенче салтаксемпе офицерсем республикăри ĕççыннисен представителĕсемпе тĕл пулнă. Ĕççыннисен представителĕсем тылра хастарлă ĕçлекенсенчен фронта парнесем тата çырусем илсе пынă.

Корея Халăх çарĕ çинчен ÿкернĕ фильмсене кăтартаççĕ. Фильмсене курма халăх питĕ нумай çÿрет. Паян каçхине Пхеньян, Вонсан, Нампхо тата Хамхын хулисенче уяв ячĕпе артиллерирен çирĕм хут харăс персе салют панă.

Корея Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнă ятпа Пхеньянра пулнă савăнăçлă лару

ПХЕНЬЯН, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Корея Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнă ятпа ĕнер Пхеньянра савăнăçлă лару пулса иртнĕ.

Маршал Ким Ир Сен, Ким Ду Бон, Пак Хен Ен, Пак Ден Ай тата Корейăри Ĕçлĕх партийĕпе Демократиллĕ Корея Халăх Республикин правительствин ытти руководителĕсем, çавăн пекех Совет Союзĕн посолĕпе Китай Халăх Республикин посолĕ президиума тухнине ларăва пухăннисем нумайччен, тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Хисеплĕ президиума И. В. Сталин Генералиссимуса, Ким Ир Сен маршала, Мао Цзе-дун председателе суйлаççĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикин наци оборонин министрĕ Цой Ен Ген вице-маршалл Халăх çарĕ пилĕк çул тултарни çинчен доклад туса панă.

Докладчик Халăх çарĕн мухтавлă çулĕ çинчен калать. Вăл Ким Ир Сен маршал Демократиллĕ Корея Халăх Республикин хĕçпăшаллă вăйĕсене организацилес тата вĕсене ертсе пырас ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать, Корея халăхĕн ирĕклĕхĕшĕн, Америка интервенчĕсемпе Ли Сын Ман лакейĕсене хирĕç пыракан Отечественнăй вăрçи çинчен калать. Халăх çарĕн салтакĕсемпе офицерĕсен хăюлăхĕпе паттăрлăхĕ çинчен, тет Цой Ен Ген, хĕвелтухăç фронтĕнче 1.211 сăртшăн пынă çапăçусем пек фактсем лайăх каласа параççĕ. Иртнĕ çулта интервентсен çарĕ çак вырăнти кашни тăваткал километр çине вăтам шутпа 527.260 снаряд пенĕ, 4.160 бомба пăрахнă. Сăрт çине 2.000 хут пулеметсенчен пенĕ. Анчах халăх воинĕсем—1.211 сăрта паттăррăн хÿтĕлекенсем çак района халĕ те чыслăн хÿтĕлеççĕ, тăшманăн çыннисемпе техникине нумай пĕтереççĕ. Корея Халăх çарĕ яланах паттăрлăх кăтартать. Халăх çарĕн 11 соединенийĕпе чаçне гварди ятне, çавăн пекех 407 салтакпа офицера тата генерала Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Геройĕ ятне пани çавăн çинчен калать.

Цой Ен Ген юлашкинчен фронтпа тыл хушшинчи, çарпа халăх хушшинчи çирĕп çыхăну çинчен, Корея халăхĕ хăйĕн çарĕпе Корейăри Ĕçлĕх партине, Корея халăхĕн çĕнтерĕвĕсен организаторне Ким Ир Сена юратни çинчен калать. Докладчик çакна шанса тăнине палăртать: Тăван çĕршывăн чысĕшĕн, пĕрлĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн агрессорсене хирĕç пыракан кĕрешÿре Халăх çарĕ хăйĕн халăхĕн шанăçне тÿрре кăларĕ.

Ларура Пĕрлĕхлĕ демократиллĕ отечественнăй фронтăн Центральнăй Комитечĕн саламне вуласа панă.

Китай халăх добровольцĕсен паттăр чаçĕсен представителĕ саламлă сăмах каланине ларура пулнисем ăшшăн кĕтсе илнĕ.

Корея Халăх çарĕ пилĕк çул тултарнă ятпа Халăх çарĕн представителĕ Ким Ир Сен маршала саламлă ялав панă.

Ларура пулнисем пысăк çĕкленÿпе И. В. Сталин, Ким Ир Сен тата Мао Цзедун патне саламлă телеграммăсем яма йышăннă.

Кенири лару-тăру

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Англин Кенири влаçĕсем негр халăхĕ тĕлĕшпе хаяр мерăсем йышăнма пăрахмаççĕ. Ăна вĕсем халăхăн прависемпе интересĕсене хÿтĕлессишĕн пыракан юхăма пусарас тесе тăваççĕ. Негрсем пурăнакан вырăнсенче, «тĕрĕслес» тĕллевпе, вĕçĕмсĕр облавăсем иртереççĕ. Çак «тĕрĕслÿсем» хыççăн арестленĕ негрсен хисепĕ 13 пин çынна çитнĕ.

«Дейли уоркер» хаçат çапла çырнă: хăйсен сăнне ÿкерттерме килĕшменшĕн кăна (чрезвычайнăй положени тунă май иртерекен мерăсенчен пĕри) 26 негра тĕрлĕ срокпа—3 уйăхран пуçласа 6 уйăх таран тĕрмене хупмалла тата кашниех 50 фунт стерлингран пуçласа 150 фунт стерлинг таран штраф тÿлеттермелле тунă. Çав негрсене арестленĕ хыççăн çийĕнчех суд тунă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çак кунсенче Абăрдэр ятлă сăрт-тулла вырăнта полицейскисем 8 негра персе пăрахнă, 20 негра арестленĕ.

Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕнче

БУХАРЕСТ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕн тăххăрмĕш вăййинче Смыслов (СССР) Штольпран (Швеци) выляса илнĕ. Совет гроссмейстерĕ Петросян 46 хут çÿренĕ хыççăн Рэдулескуна (Румыни) парăнтарнă. Барда (Норвеги) Сливаран (Польша) выляса илнĕ.

Болеславскипе Толуш хушшинчи парти пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. Венгри шахматисчĕсем Л. Сабо тата Барда пĕрне-пĕри çĕнтереймен тесе йышăннă. О'Келлипе (Бельги) Филипп (Чехословаки) хушшинчи парти те пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ. Голомбекпа (Англи) Рейхер (Румыни) хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă. Голомбекăн выляса илме шанчăк пур.

Чоколтяпа (Румыни) Шайтар (Чехословаки) хушшинчи тепĕр вăхăта хăварнă партире Чоколтя çĕнтерме пултарать. Милевпа (Болгари) Троянеску (Румыни) хушшинчи партие тепĕр вăхăта хăварнă.

БУХАРЕСТ, февралĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Пĕтĕм тĕнчери шахмат турнирĕн вуннăмĕш вăййине иртернĕ.

Спасскипе (СССР) Барда (Венгри) хушшинчи, Болеславскипе (СССР) О'Келли (Бельги) хушшинчи, Смысловпа (СССР) Ш. Сабо (Румыни) хушшинчи тĕлпулусем пĕрне-пĕри çĕнтерейменнипе вĕçленнĕ.

Л. Сабо (Венгри) Рейхера (Румыни) çĕнтернĕ. Штольц Румыни шахматистне Чоколтяна выляса янă. Милев (Болгари) Шайтара (Чехословаки) парăннă.

Толушпа (СССР) Рэдулеску (Румыни) хушшинчи, Филиппа (Чехословаки) Барда (Норвеги) хушшинчи, Петросянпа (СССР) Троянеску (Румыни) хушшинчи, Сливапа (Польша) Голомбек (Англи) хушшинчи партисене тепĕр вăхăта хăварнă.

Чăваш академи театрĕ 35 çул тултарас умĕн

Кăçал Чăваш академи театрĕ ĕçлеме пуçланăранпа 35 çул тултарать. Юбилей кунĕсенче театр коллективĕ чылай районсенче пулать. Театр артисчĕсем заводсенче, фабрикăсенче, колхозсенче спектакль куракансемпе тĕл пулаççĕ. Кунпа пĕрлех репертуарти чи лайăх спектаклĕсене — «Нарспи», «Ялта», «Çембе чысĕ», «Сенкер вÿлĕ», «Назар Стодоля» тата ытти пьесăсене те сцена çинче лартса кăтартаççĕ.

Театр 35 çул тултарнă май март уйăхĕн пуçламăшĕнче юбилей ячĕпе вунă кунлăх иртерсе спектакльсем кăтартаççĕ. Ун чухне К. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх хатĕрленĕ постановкăна, В. Ржановăн «Энтип», Ю. Буряковскин «Юлиус Фучик» çинчен çырнă пьесине, аслă вырăс классикĕн Н. В. Гоголĕн «Ревизор» комедине тата ыттисене те кăтартаççĕ.

Юбилейлĕ спектакльсен вунăкунлăхĕ мартăн 14-мĕшĕнче Чăваш академи театрĕ 35 çул тултарнине чысласа иртермелли чаплă ларупа вĕçленет.

Вунăкунлăх хыççăн театр коллективĕ икĕ бригадăна уйрăлса, Шупашкар, Ишлей, Çĕрпÿ, Муркаш, Шăхасан, Канаш, Сĕнтĕр тата ытти районсене каять, унта хăйĕн чи лайăх спектаклĕсене кăтартать.

Çĕнĕ спектакльсем

Республикăри театрсем çĕнĕ спектакльсем чылай хатĕрлеççĕ. Чăваш академи театрĕн коллективĕ А. Эсхелĕн «Виçĕ туй» пьесине лартма хатĕрлет. Пьесăра колхоз çамрăкĕсен паянхи тулăх пурнăçне сăнласа кăтартнă. Пьеса валли кирлĕ музыкăна Т. Фандеев композитор çырнă. Спектакле Чăваш АССР искусствисен тава тивĕçлĕ деятелĕ Л. Родионов лартма хатĕрлет.

Вырăсла драма театрĕн коллективĕ пĕр вăхăтрах икĕ пьеса хатĕрлет. М. Генин режиссер А. Успенскипе Л. Ошанин çырнă «Твое личное дело» пьесăна лартма хатĕрлет. Пьесăра совет çемйине, унти туслăха, çамрăксене воспитани панине кăтартнă.

Çавăн пекех латышсен паллă поэчĕ-классикĕ Ян Райнис çырнă «Вей ветерок» пьесăна лартма хатĕрлеççĕ. Ку постановкăна Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ А. Мудров хатĕрлет.

Çамрăксен театрĕн коллективĕ «Всадник, скачущий впереди» пьесăна лартма хатĕрлеме тытăннă.

Художествăллă пултарулăх коллективĕсен концерчĕ

Чăваш государство филармони залĕнче Шупашкарти 1-мĕш типографипе Сыхăну управленийĕнче ĕçлекенсен художествăллă пултарулăх коллективĕсен концерчĕ пулчĕ.

Концерт репертуарĕнче чăваш композиторĕсен юррисем, мир çинчен, коммунизмăн аслă стройкисем тата Сталин юлташ çинчен хывнă юрăсем нумай пулчĕç.

Типографи хор коллективĕ (руководителĕ çамрăк композитор А. Галкин) Сталинла премин лауреачĕ Ф. Лукин композитор çырнă «Пире Сталин ырлăх пачĕ», С. Заславский çырнă «От Волги до Дона» юрăсене уçăмлă та янравлă юрласа пачĕ.

ХОККЕЙ ВĂЙЙИПЕ РЕСПУБЛИКĂРА МАЛА ТУХАССИШĔН

Февралĕн 8-мĕшĕнче Шупашкарти «Молния» спорт обществи стадионĕнче хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн икĕ вăйă пулчĕ.

Чи малтанах Чапаевски поселокпа «Спартак» спорт обществи хоккейсчĕсем тĕл пулса вылярĕç. Спартаковецсем Чапаевски поселок командине 7:2 шутпа çĕнтерчĕç.

Хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн кăçал иртерекен ăмăртура Шупашкарти динамовецсем уйрăмах ăнăçлă выляççĕ. Иртнĕ вырсарникун «Динамо» команди 1952 çулта республика чемпионĕн ятне илнĕ командăпа—«Молния» спорт обществи командипе тĕл пулса вылярĕ. Стадион хуçисем динамовецсене 0:2 шутпа выляса ячĕç.

Пĕлтерни

Февралĕн 10-мĕшĕнче, 20 сехетре, партин хула комитечĕн библиотека çуртĕнче пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул ĕçлекен политшкул руководителĕсен тата И. В. Сталин биографине вĕренмелли кружок руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «Коммунистсен партийĕ—совет обществин ертсе пыракан вăйĕ, ССР Союзĕнчи коммунизм строительствин организаторĕ тата хавхалантаракан蔽».

Семинара КПСС обкомĕн лекторĕ И. А. Рогоцкий юлташ иртерет.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редакторшăн М. Н. ЯКИМОВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, февралĕн 10-мĕшĕнче, вырăсла спектакль
«БОГАТЫРСКИЙ СКАЗ»
Ыран, февралĕн 11-мĕшĕнче, чăвашла спектакль
«АЙДАР»
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

Хĕвеланăç Берлинри ĕççыннисем фашистсен митингне иртterme чарнă

БЕРЛИН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Хĕвеланăç Берлинри Нейкельн районĕнчи рабочисем фашистла «нимĕç партийĕн» митингне иртерме чарнă. АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ку районти 600 рабочи митинг пулмалли çурт умне пухăннă. Вĕсем митинга чарма требовани лартнă. Рабочисем татăклăн протестленине пула, Хĕвеланăç Берлин сеначĕ фашистла митинга иртерме чарнă.

Рабочисем çавăн пекех «нимĕçсен партине», фашистла тата террористла ытти организацисене ĕçлеме чарма требовани лартнă.

ДЕМОКРАТИЛЛĔ ГЕРМАНИ РЕСПУБЛИКИНЧИ ÇĔРСЕН ПАЛАТИ ГОСУДАРСТВĂН 1953 ÇУЛХИ БЮДЖЕЧĔ ÇИНЧЕН ЙЫШĂННĂ ЗАКОНА ÇИРĔПЛЕТНĔ

БЕРЛИН, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Берлинра Демократиллĕ Германи Республикинчи Çĕрсен палатин черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ. Ку ларура Çĕрсен палатин депутачĕсем Демократиллĕ Германи Республикин Халăх палати Демократиллĕ Германи Республикин 1953 çулхи государство бюджечĕ çинчен йышăннă закона сÿтсе явса пĕр кăмăллă пулса ырланă.

ХĔВЕЛАНĂÇ БЕРЛИНРА ÇĂКĂР ХАКНЕ ÿСТЕРНĔ

БЕРЛИН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Берлинри депутатсен хулари пухăвĕнче Хĕвеланăç Берлинри çăкăр пĕçерекен предприятисен представителĕ Древиц тухса каланă. Вăл çапла пĕлтернĕ: февралĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа, Бонн правительстви йÿнĕ çăнăх сутас ĕç валли укçа уйăрса пама чарăннă пирки, Хĕвеланăç Берлинра çăкăр хакне ÿстереççĕ. АДН агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Хĕвеланăç Берлинра çăкăр хакĕ 50 процента яхăн ÿсет.

Бонн парламенчĕ Хĕвеланăç Германири çĕнĕ суйлав законĕн проектне сирсе янă

БЕРЛИН, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). ДПА агентстви пĕлтернинчен çакă паллă: ĕнер Бонн парламенчĕн иккĕмĕш палати Бонн правительстви туса хатĕрленĕ реакциллĕ суйлав законĕн проектне йышăнман. Парламент правительствăна урăх суйлав законĕ туса хатĕрлеме сĕннĕ.

БЕЛЬГИРЕ ШЫВ ИЛНИ

БРЮССЕЛЬ, февралĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, тинĕс çывăхĕнчи районсене шыв илнине пула, Бельгири нумай ялсем халĕ те шыв айĕнчен тухман. Хĕвеланăç Фландри провинцийĕнчи тата Антверпен çывăхĕнчи ялсенче, уйрăммăнах Мельзель, Кало, Лилло хулисен районĕсенче лару-тăру питĕ йывăр. Вăл районсенче шыв каллех хушăнни палăрать. Антверпен çывăхĕнче те шыв каллех тулма тытăннă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, хахуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01286 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.